# СУНТАЛ №2



# ШУРНАЛТА ПУРРИ:

*Стр.*

1. **Павлăв**—Совет Сойусĕ вăрçасшăн мар, анçах хăй çине тăшмансем килесрен сыхă тăрат (статйа) . . . 1
2. **К. Н. Касакков**—Куլттурăпа итеолоки фронтĕнçе (статйа) 3
3. **Иссайĕв М.**—Çулăмри йал (повĕçĕн йулашки) . . . . . 5
4. **Йанкас**—Йантрамаст тек купăс уççăн (сăвă) . . . . . . 10
5. **Уйăп Мишши, Тукташ, Йехрим Иванĕ** сăввисем . . . . . 11
6. **Тукташ**—Ӳкĕнĕçлĕ йурату (тутарларан **Шелепи** куçарнă поемă) . . . . . . . . . . . . . . . . . . 12
7. **В. Паймен**—Тавăрăп (калав) . . . . . . . . . . . . . 14
8. Ăслăлăх—ĕçхалăхне, **С. Ласт-н**—Ђăваш рапфакĕ (сакăр çул тултарнă майĕпе аса илнисем) . . . . . . 15

*Стр.*

9. **В. Паймен**—Самарти ђăваш шкулĕ 6 çул тултарнă майĕпе (статйа) . . . . . . . . . . . . . . . 16
10. **Патман**—А. Ç. Çерафимовиђ (статйа) . . . . . . . . . 17
11. **Хумма Çеменĕ**—А. Ç. Крипойетăв (статйа) . . . . . . . 19
12. **Ф. Ш.**—Антарктитă ăшнелле (науккăпа техникă) . . . . 20
13. **М. Феотăрăв**—Пуçлакан поетсен пултаруллăхĕ (криттикă) 21
14. **В-ка**—Ђăвашла кăлентар . . . . . . . . . . . . . . 23
15. **Авраљ**—Вырăс клаççĕкĕсене ытларах вуласа вĕренер (литтераттурă шкулĕ) . . . . . . . . . . . . . —
16. Ђăваш Пролеттари Писсаттĕлĕсен „Канаш“ сойусĕн пленăмĕ правлени отђоçĕ тăрăх йышăннă ресољутси 24
17. Совет Сойусĕнçе çĕнни мĕн пур т. ыт. те—хуплашкисенçе.

## Ђăвашсен автономийĕ 10 çул тултарнă йађĕпе тăвакан илемлĕ литтераттурă ăмăртăвĕн условийĕсем.

Ăмăртăвăн икĕ тĕп сатаççă: 1) Октăпĕр револютси тивлеђĕпе тунă Ђăваш республĕкĕн ку таранђђенхи ӳсĕмне пур йенђен те кăтартса парасси, ђăваш ĕçхалăхĕн сотсиалисăмшăн паттăрăн кĕрешнĕ çулне çутатса парасси; 2) ђăвашсен илемлĕ литтераттурĕн пултарулла вăйĕсене палăртасси.

Ђăваш автономийĕ ђăваш ĕçхалăхне политтĕкпе хуçалăх йенђен, куљттурă йенђен мĕн пани, ђăваш ĕççынни краштăн вăрçинђе çапăçни, ку таранђђенхи кĕрешӳри йăвăрлăхсемпе тумхахсем (выçлăх, кулаксен восстанийĕ, тĕшмĕшлĕх-тĕттĕмлĕх т. ыт.) ку таранђђенхи ӳсĕмсем (ушкăнлă хуçалăхсем, хапрăк-савăтсем, копператси, куљттура ĕçĕ т. ыт.) йалти клас кĕрешĕвĕ, ђăваш ĕççынни, ђăваш хĕрарăмĕ, ђухăнсем патшалăх ĕçне хутшăнни, хулапа йал çыхăнăвĕ, натси ыйтăвĕ, çĕнтерсе пыракан сотсиалисăмăн ӳсĕмĕсем, партти, комсомол т. ур. те. Темăсем пит те нумай ыйтусене çавăрса илме пултараççĕ. Иртнĕ ӳсĕмсемпе пайанхи-ыранхи ĕçсемпе çыхăнтарса кăтартма тăрăшас пулат.

### Мĕнле формăпа çырмалла.

1) Повĕçсемпе романсем, вĕсен пысăккăшĕ 2 пиђетлĕ листаран кайа пулмалла мар тата калавсем;
2) трамăллă происветенисем;
3) поемăсем, ытти сăвăллă формăсем те.

Çырасса ђ ă в а ш л а çырмалла, ăмăртăва йанă йапаласене лайăх пођђĕркпа, йе машшинккăпа, хутăн пĕр йенне, ђернилпа çырса йамалла.

**Асăрхаттăрни:** Ђăваш автономийĕн 10 çулхи ӳсĕмĕсемпе кĕрешӳне тĕплĕн, тарăн кăтартса паракан хаклă, паха происветенисем **ытти ђĕлхепе** çырнисем те, ăмăртăва тăма пултараççĕ.

### Хăçан çырса памалла.

Происветенисене 1929-мĕш çулхи нойапĕрĕн 1-мĕшĕђђен çырса пĕтерсе Шупашкара—ăмăрту комиççине памалла. Происветенисене илмелли ђи йулашки срок 1930-мĕш çулхи йанварĕн 1-мĕшĕ пулат.

Çыракансем хушаматпа атрĕссене вăрттăн паккета хурса йараççĕ.

Премии илнĕ происветенисем уншăн, премисĕр пуçне, тивĕçлĕ конорар памалла пиђетленеççĕ.

### Премисем.

Укçалла премисем 10 пулаççĕ. Унсăр пуçне отсăвсем йапалаллă парнесем пулаççĕ.

| | | | |
|---|---|---|---|
| 1-мĕш | преми | п ĕ р р е | —500 тенкĕ. |
| 2 „ | „ | и к к ĕ | —400 „ |
| 3 „ | „ | и к к ĕ | —300 „ |
| 4 „ | „ | и к к ĕ | —200 „ |
| 5 „ | „ | в и ç ç ĕ | —100 „ |

Мĕн пурĕ 2.600 тенкĕ.

Кунсăр пуçне тĕрлĕ орканисатсисем (копператси, хуçалăх, патшалăх оркăнĕсем, ирĕклĕ орканисатсисем хăйсенђен ăмăртура преми пама укçа йе йапала уйăрса хума пултараççĕ.

Ăмăрту комиççийĕ 7 çынтан пулат, унта кам тăнине уйрăм пĕлтерĕпĕр.

**ЂПП „Канаш“ сойусĕн правленийĕ.**

---

## ÇĔНĔ КĔНЕКЕСЕМ

**И. Касаткин.** «Ç у н а т П е т ĕ р ĕ», вырăсларан куçарнă калав, кам куçарни паллă мар. СССР-ти Халăхсен Тĕп Истаттĕлстви кăларнă. Мускав, 1927 ç., 4000 екс. çапăннă. Хакĕ 12 пус.

Çунат Петĕрĕ—ĕçхалăх геройĕ, паттăр çын, шкул ађисене вĕрентекен пулнăскер. Краштăн вăрçи вăхăтĕнçе вăл пĕтĕм Урал тавраш ĕнђи хресђенсене шуррисене хирĕç тăратнă. Хăй вăл парттисан отретне йертсе пыраканĕ пулнă. 2—3-шер кун çывăрмасăр, канма-пĕлми ĕçленĕ. Çавăншăн шуррисем унăн пĕтĕм çемйине асаплантарса пĕтернĕ. Петĕр çавах хăй ĕçне пăрахман тата хăватлăрах çар çынни пулса кайнă.

Калаври çакăн çинђен тĕплĕ кăтартнă. Парттисансем Петĕре мĕншĕн йуратни те аван палăрат. Калава пит ăнланмалла ђĕлхепе çырнă, куçарасса та лайăх куçарнă. Акă çак вырăна илер: „Тĕттĕмленђĕ. Çăлтăрсем сырса илђĕç тӳпене. Каçхи нăрăсем пуђă пек сĕрлесе ирте-ирте кайаççĕ пуç çинђен. Хăш-пĕр нăрри тимĕр пăрса пекех çат! тутараççĕ çамкаран. Çерем çинђи салтаксем те шатах канмашкăн тăсăлатăсăла выртрĕç. Хушăран унта-кунта ђалт! туса шăрпăк çутăлат те, перус ĕмекенĕн тути курăнса кайат... Лăпкă...“ Йака, опрăслă çырнă, вуланăçем вулас килмелле. Кĕнеке хакĕ йӳнĕ. Ăна кашнă вуламалли çуртăн туйанмалла, уллахсенђе вулама йатнех. Калава шкулта вулама сĕнме те тивĕç. Краштăн вăрçи вăхăтĕнђи геройсемпе, шуррисен тискер ĕçĕсемпе лайăх паллаштарат. Анђах кĕнекере вак-тĕвек йăнăшсем пур. Пиђетлесе кăлараканнисем тĕплĕ пăхман: „вăл“ сăмах вырăнне „т ĕ л“ тесе çырнă (4 стр.); „моноккăљ“ вырăнне „м о н о х и в“ тесе çапнă (22 стр.); „хĕрӳ“ вырăнне „х ĕ н ӳ“ тенĕ (24 стр.) ыт. те.

Калавра „т р е ç и н ă, т е м а н (есрел), п р о н ĕ л л ă“ сăмахсем тĕлпулаççĕ, вĕсене ăнлантарса панă пулсан лайăх пулмалла мĕн. Кĕнеке кăларакансене тирпейлĕрех ĕçлеме вăхăт та ĕнтĕ.

**Ваççу.**

*Пиллĕкĕмĕш çул тухаť.*

**Пĕтĕм тĕнḑери пролеттарисем, пĕрлешĕр!**

№ 2 (56)
ФЕВРАĻ, 1929

# СУНТАЛ

Ḑăваш пролеттари писсаттĕлĕсен КАНАШ сойусĕн литтературă, криттĕк, политтĕк тата наукă шурналĕ

ХАКĔ: 1 уйăха—20 пус, 3 уйăха—60 пус, 6 уйăха—1 тенкĕ те 20 пус, 1 çула—2 тенкĕ.

РЕТАКСИ АТРĔСĔ: гор. Чебоксары, Канашская улица, дом № 15, телефон № 47.

## Совет Сойусĕ вăрçасшăн мар, анḑах хăй çине тăшмансем килесрен сыхă тăраť.

Краштăн вăрçи пĕтнĕ хыççăн Совет Сойусĕнḑи ĕçлекенсемпе хресḑенсем лăпкă пурнăçпа пурăнса, хăйсен хуçайствине малалла йарас тесе тăрăшса ĕçлеме тытăнḑĕç. Ĕçлекенсемпе хресḑенсене мĕн кирлĕ? Вĕсене хамăрăн промышлĕннăçа, йал хуçалăхне вылḑăх-ḑĕрлĕх усрас ĕçе, копператси ĕçне малалла йани кирлĕ, çавсене çирĕплетни кирлĕ. Ĕç халăхне влаçа илнĕ хыççăн, йалти советсене çирĕплетни, йалхуçалăхĕнḑе сухапуçне пăрахса машшинпа ĕçлеме пуçласси, хулара хапрăк-савăтсене нумайлатни тата шкулсемпе, пиплиоттексене, пуļнитсасене нумайлатни кирлĕ. Çапла ĕнтĕ совет патшалăхĕнḑи ĕç халăхĕ умĕнḑе питĕ нумай ĕçсем, çавăнпа та вĕсем ḑунтан-вартан лăпкă пурнăçшăн тăрăшаççĕ. Вăрçă вăхăтĕнḑе пĕтсе ларнă хапрăк-савăтсене ĕçе йарас тесен, йала йўнĕ тавар парас тесен, сотсиалисăмлă пурнăç тăвас тесен, лăпкă пурнăç кирлĕ Краштăн вăрçи хыççăн — 6—7 çул хушшинḑе Совет патшалăхĕн хуçалăхĕ ўссе çирĕпленсе пыни курăнсах тăраť. Епĕр сотсиалисăм çулĕ çине тухни паллă, анḑах хамăр пуçланă ĕçе малашне те çаплах илсе пырас тесен, патшалăхăн лăпкă пурнăç политтĕкне пурнăçа кўртме тăрăшас пулаť. Тĕрлĕ сйессенḑе, конферентсисенḑе Совет патшалăхĕ хăйĕн лăпкă пурнăç, вăрçа хирĕç пыракан политтĕкне кăтартса пĕтĕм вăйпа хăйĕн хуçалăхне хăпартма тăрăшаť. Ытти патшалăхсен преставиттĕлĕсемпе пĕрле тĕрлĕ пухусене пухăнсан та, Совет патшалăхĕ хăйсен телекаḑĕсем урлă капиталиссене хĕçпăшала, вăрçă хатĕрĕсене, çарсене йе сахаллатма, йе вуçах пĕтерме ḑĕнет. Анḑах ытти патшалăхсем Совет влаçĕ ḑĕнни çине пăхмаççĕ, вăрçа хатĕрленеççĕ.

Мĕншĕн капиталиссем Совет Сойусĕ ḑĕнни çине пăхмаççĕ, мĕншĕн вĕсем лăпкă пурнăç тăвасшăн марши? Мĕншĕн тесен капиталиссем вĕсем вăрçăсăр пурăнма пултараймаççĕ. Капиталиссен патшалăхĕнḑе пуçлăхра мул хуçисем ларaççĕ, вĕсем хăйсен пуйанлăхне нумайлатма тăрăшаççĕ, вĕсем пĕрпĕринḑен мĕнле те пулсан ытларах çĕр, пуйанлăх, тавар сутма рынăксем, промышлĕннăçа ваļļи кирлĕ ḑĕрĕ таварсем туртса илме хăтланаççĕ.

Пирĕн патшалăх лăпкă пурăнма шутлани çинḑен Пĕтĕм Сойусри Советсен III-мĕш сйесĕ ак çапла каласа хăварḑĕ:

„Пирĕн хаḑхи вăхăтри политтĕкĕн тĕп ыйтăвĕ,— мĕнле те пулин лăпкă пурнăç тăвас тĕлĕшпе ĕçлесе пырасси. Пирĕн политтĕк пĕтĕм тĕнḑере лăпкă пурнăç тăвасси, мĕншĕн тесен çав пурнăçа Совет ирĕкĕнḑи ĕçхалăхĕ анḑах мар, пĕтĕм тĕнḑери ĕçхалăх кĕтсе тăраť“, терĕ. Анḑах епĕр лăпкă пурнăç политтĕкне пурнăçа кĕртме тĕрлĕ майпа тăрăшатпăр пулсан та, çапах кирек хăçан та хамăр ирĕке сыхлама хатĕр пулмалла, мĕншĕн тесен капитталиссем пирĕн ирĕке пĕтерме хатĕрленеççĕ, вĕсем вăрçă хатĕрлеççĕ.

Капиталиссем вăрçма кăшни кун хатĕрленни çинḑен Комуниссен интернатсионалĕн VI мĕш конкресĕ лайăх каласа хăварḑĕ. Конкрес каласа хăварнă тăрах пĕтĕм тĕнḑери ĕçхалăхĕн Совет патшалăхне сыхлама хатĕр пулмалла, импералисăмлă вăрçа хатĕрленнине хирĕç кĕрешме тăмалла.

Капиталиссем хăйсем хушшинḑе мĕншĕн вăрçма хатĕрленни паллах—ун çинḑен малта кăшт каланăḑḑĕ. Капиталиссем Совет ирĕкне тата мĕншĕн кураймаççĕши? Мĕншен тесен Совет Сойусĕ сотсиалисăм çулĕпе пыраť, пĕтĕм ĕçхалăхне хăйĕн хыççăн йĕртсе пыраť, хĕвелтухăç йенḑи патшалăхсенḑи вак халăхсене йертсе пыраť тата пĕтĕм тĕнḑери пролеттарисене—револютси çулне кăтартса пыраť. Çак йапаласем вĕсем капиталисăма пĕтерме хатĕрленсе пынине кăтартаççĕ. Мул хуçисем хăйсем пĕтессине сиссе—Совет патшалăхне пĕтересшĕн тăрăшаççĕ.

Çавăнпа та капиталиссем хăйсен çарĕсене, вăрçă техниккине, хĕçпăшалĕсене нумайлатса, çирĕплетсе пыраççĕ.

Ун çинḑен ак çак ḑихвăрсем лăйăх кăтарса параççĕ.

**Вăрçă пўтшеḑĕсем ўссе пыни:**

| Патшалăхсем | Мĕлйун ылтăн текĕпе шутласан: 1913 çулта | 1927 çулта |
|---|---|---|
| Франтси . . . . . . . . | t98 | 1.600 |
| Анкли . . . . . . . . . | 860 | 1.155 |
| Иттали . . . . . . . . | 162 | 406 |
| Амерĕк . . . . . . . . | 266 | 1.369 |
| Йаппони . . . . . . . | 120 | 484 |

Çапла ĕнтĕ капиталиссем хăйсен вăрçă пўтшеḑĕсене 13-мĕш çулпа танаштарсан икшер-виçшер хут ўстерсе йанă.

**Çарсем ўссе пыни:**

| Патшалăхсем | пинпе шутласа 1913 çулта | 1923 çулта | 1927 çулта |
|---|---|---|---|
| Франтси . . . . . . . | 456 | 732 | 729 |
| Анкли . . . . . . . . | 441 | 329 | 372 |
| Иттали . . . . . . . . | 400 | 248 | 572 |

**Вӑрҫӑ йопалисем нумайланни:**

| Патшалӑхсем | 1914 ç. | 1923 ç. | 1927 ç. |
|---|---|---|---|
| Франтси . . . . . | 162 | 1.350 | 1.640. |
| Анкли . . . . . . | 66 | 385 | 700. |
| Иттали . . . . . . | 35 | 250 | 700. |
| Америк . . . . . | 25 | 420 | 500. |

Çапла ӗнтӗ çак ђихвӑрсем вӑрçӑ пӗтсе лӑпкӑ пурӑнма шутланине мар, капиталиссем пӗр-пӗринпе, тата Совет Сойусӗпе вӑрçма хатӗрленнине кӑтартаççӗ.



Унсӑр пуçне капиталиссем Совет патшалӑхӗ çинђен ӗçхалӑхӗ хушшинђе тӗрлӗрен елексем сараççӗ, Совет Сойусӗ йатне çӗртме тапаланаççӗ.

Епӗр капиталиссем çинђен, вӗсем мӗнле хӑйсен вӑрçӑ хатӗрӗсене ӳстерни çинђен калана вӑхӑтра Хӗрлӗ çар çинђен те астуса илес пулаҭ. Пирӗн Хӗрлӗ çар çирӗпленсе пыни, пирӗн сыхлӑх ӗçӗ малалла пыни паллах вӑл. Епӗр вӑрçӑшӑн мар, епӗр Хӗрлӗ çара та сахаллатнӑ—562 пин çын анђах хӑварнӑ. Анђах Хӗрлӗ çар хыççӑн мӗлйунлӑ ӗçхалӑхӗн çарӗсем пынине пӗртте манмалла мар. Хӗрлӗ çар килес вӑрçӑра пӗђђен мар вӑл, пӗтӗм тӗнђери ӗçхалӑхӗпе пӗрле пулаҭ çакӑнта вӑл Хӗрлӗ çарӑн пӗтӗм вӑйӗ, çавӑнпа ӗçлекенсемпе-хресђенсен çарӗ çитес класлӑ вӑрçӑра çӗнтерӗ те.

Хӗрлӗ çарӑн техникки те, хӗçпӑшал таврашӗ те ытлашши йулсах пымасҭ. Политтӗкпа çар ӗçне вӗренес тӗлӗшрен Хӗрлӗ çар ытти патшалӑхсен çарӗсенђен нумай малта пыраҭ.

Хӗрлӗ çар вӑл ӗçлекенсемпе хресђенсен çарӗ, вӗсен комантирӗсем те хресђенсемпе ӗçлекенсен ађисем.

Хӗрлӗ çарта:

| | |
|---|---|
| ӗçлекенсем . . . . . . . . . . . . . . . . | 18,1% |
| хресђенсем . . . . . . . . . . . . . . . . | 71,3% |
| ыттисем (слушӑшђисем) . . . . . . . . . | 10,6% |

Комантирсем хушшинђе:

| | |
|---|---|
| ӗçлекенсем . . . . . . . . . . . . . . . . | 21,7% |
| хресђенсем . . . . . . . . . . . . . . . . | 49,4% |
| ыттисем . . . . . . . . . . . . . . . . . . | 28,9% |

Хӗрлӗ çар кашни çул—патшалӑх хуçалӑхӗпе пӗрле çирӗпленсе пыраҭ пулсан та, унпа пӗрле Осоавиахим органисатсисем те хӑйсен ӗçӗсене малалла йарса пыраççӗ пулсан та, çапах та пирӗн хамӑрӑн сыхлӑх ӗçне тата çирӗплетме тӑрӑшмалла.

Совет патшалӑхӗ тӗнђере пӗрре анђах халӗ, тепӗр йенђен капиталиссем пиртен пуйантарах, вӗсем ӗçхалӑхне улталама май тупса, Совет Сойусне хирӗç йама та пултараççӗ. Тепӗр йенђен вӑрçӑ техникки питӗ ӳссе пынӑ пирки, килес вӑрçӑсенђе пӗтӗм халӑх, пӗтӗм патшалӑх вӑрçа кӗрекен пулаҭ.

Çавӑнпа пирӗн килес класлӑ вӑрçӑра çӗнтерес тесен, пурин те пӗр çын пек хатӗр пулмалла. Кашни краштанинӑн пӑшала алла илсе тӑшманӑн йероппланӗсене персе ӳкерме вӗренмелле, кашни ӗççыннин маскӑ тӑхӑнма тӗрлӗ кассенђен хӑйне сыхлама вӗренмелле. Хӗрлӗ çарӑн 11-мӗш çулне астуса иртернӗ ђух епӗр хӑрушӑ вӑхӑтра пурӑннине пӗрте манмалла мар. Пирӗн умра сыхлӑх ӗçне çирӗплетес тӗлӗшпе ак çакӑн пек сатађсем тӑмалла.

Хӗрлӗ çара пӗтӗм вӑйпа çирӗплетме тӑрӑшмалла, ӗçхалӑхне хӗрлӗ касармӑ пурнӑçӗпе паллаштармалла, хӗрлӗ салтаксен пурнӑçне тӗрлӗ майпа лайӑхлатма тӑрӑшмалла, Хӗрлӗ çар хӑйӗн хыççӑн пӗтӗм ӗçхалӑхӗ пынине пӗлсе тӑрсан анђах тӑшмана вӑрçӑра çӗнтерме пултараҭ.

Тепӗр йенђен вырӑнсенђи Осоавиаххим ӗçӗсене малалла йама тӑрӑшмалла. Осоавиаххим ӗçӗсем пур йенђен те лайӑх пынине курайманпӑр халӗ, йалти йађђейккӑсем йулсарах пыраççӗ. Осоавиаххим вӑл Хӗрлӗ çар вађђи вӑй хатӗрлет, вӑрçӑ вӑхӑтӗнђе Осоавиаххим çара пысӑк пулӑшу параҭ. Çавӑнпа пӗтӗм ӗçхалӑхне Осоавиаххима кӗртме тӑрӑшас пулаҭ. Кӗнекесем, шурналсем, вӑрçӑ хаçађӗсем



т. ыт. те халӑх хушшинђе ытларах сарма тӑрӑшмалла. Йалти, хулари клупсенђе, вуламалли çуртсенђе вӑрçӑ кӗтессисем органисатсилемелле.

Сыхлӑх ӗçне çирӗплетесси питӗ кирлӗ ӗç пулса тӑраҭ. Пурин те ӑна тӗреклетме тӑрӑшмалла.

**ПАВЛӐВ.**

# Куԓттурăпа итеолоки фронтĕнҙе.

**„Конферентси пуринҙен ытла итеолоки йенĕпе кĕрешнии пит кирлине тата пролеттарла ҫирĕп ҫулйĕр тытса пыма кирлине кăтартса парат“** (ПСКП Ҙăваш орканисатсийĕн XIII-мĕш конферентсийĕ йышăннинҙен).

Куԓттурăна хăпартас ĕҫ хаԓхи вăхăтра пит пысăк выран йышăнса тăрат. Хуҫалăх тĕлĕшĕнҙен илсен, епир вăрҫăҙҙенхинҙен иртсе кайрăмăр. Анҙах вăрҫăҙҙенхине хуса ҫитни ҫеҫ пирĕншĕн ҫителĕклĕ мар. Промышлĕннăҫпа йалхуҫалăх йенҙен пирĕн капиталисла патшалăхсене (пиртен малта пыраканнисене) хăваласа ҫитсе иртсе кайас пулат. Ҫапла ĕҫленипе анҙах пирĕн ҫĕршыв вăйланса пырса, хăйĕн сыхлăхне тĕреклетме пултарат. Ҫавăнпа та комуниссен парттийĕ хамăр ҫĕршыва интустрилес ĕҫе тапратса йаҙĕ. Ҫак ĕҫе тупмашкăн пĕтĕм ĕҫхалăхĕн хăйĕн куԓттурине кунран-кун ӳстерсе пырас пулат.

Парттин Тĕпкомĕн нойапĕр уйăхĕнҙе пулнă пленумĕ те, пирĕн оплăҫри XIII-мĕш конференртси те йалхуҫалăхне ҫĕнетес тĕлĕшпе сатаҙсем кăтартса хăварҙĕҫ. Йалхуҫалăхне Ленин кăтартнă ҫулпа йарас тесен, уйрăм хресҙенсене кооперативсене, колхоссене кӳртсе, пĕтĕм йала ушкăнлă хуҫалăх ҫулĕпе йамалла. Анҙах кунта та куԓттурлăх кирлĕ.

Сотсиалисăма, ăна тăвас ĕҫе пĕтĕм ĕҫхалăхĕ хутшăнсан анҙах тума пулат. Епĕр хамăр аппаратсен ĕҫне ĕҫхалăх массисене ытларах хутшăнтарса пырсан анҙах, вĕсенҙен пӳрократла сынсене, ҙиновниксене, клас тĕлĕшĕнҙен йурăхсăр сынсене тасатма пултаратпăр. Тишкерӳ ĕҫне вăйлатса пырса епĕр патшалăх ĕҫне ĕҫсыннисене мĕлйуншарăн хутшăнтаратпăр. Анҙах пӳрократтисăма тĕппипех пĕтерес тесен, ĕҫхалăхĕн куԓттурлăхне хăпартмалла, мĕншĕн тесен ун тымарĕ ĕҫхалахĕ ҫителĕклĕ куԓттурлă марринҙе.

Капиталисăмла патшалăхсем пире хирĕҫ вăрҫăпа килме хыттăн хатĕрленеҫҫĕ. Пирĕн хамăрăн Совет Сойусĕн сыхлăхне вăйлатса пырас пулат. Пĕтĕм ĕҫхалăхĕн ҫар ĕҫне пĕлес, вĕренес пулат. Тата малашне ҫарсенҙе техникка та ӳссе, сарăлса пырат. Кашни хĕрлĕ салтакăнах ҫар техниккине лайăх пĕлмелле. Ку ĕҫе хут пĕлменни пит ҙарат. Ҫапла вара, ку йенҙен пăхсан та куԓттурă ыйтăвĕ хаԓхи вăхăтра пысăк выран йышăнса тăни палăрат.

Ҫавăнпа куԓттурлă револютси ĕҫне пĕтĕм ĕҫхалăхне хутшăнтарасси—ҙи малтанхи сатаҙ пулса тăрат. Ку тĕлĕшпе ҙи малтан массăна ăнланмалла, ăна кирлĕ йапаласем тумалла. Хут пĕлменнине пĕтерессине, пурне те хута вĕрентесси, профеҫҫи шкулĕсен ĕҫне йусаса йарасси, тĕне хирĕҫ тата ерех ĕҫес йăлана хирĕҫ кĕрешесси тата ытти ҫавăн пек йапаласем те халăх куԓттурлăхне хăпартас ĕҫре малти выран йышăнса тăраҫҫĕ. Ку тĕлĕшпе парттин XIII конферентсийĕ ҫапла каласа хăварҙĕ: „Халăх куԓттурине хăпартас ĕҫре, акă ҫакăн пек тĕп сатаҙ тăрат: куԓттурă тĕлĕшĕнҙен пит кайа йулнине ҫĕнтересси, хут пĕлменнине пĕтересси, шовинисăмпа натсионалисăм йенне сулăнакансемпе кĕрешесси, тĕшмĕшпе, тĕнпе, траххомпа тата халăха пĕтерекен ытти ҙирсемпе те кĕрешес пулат; выранти тĕп халăх хушшинҙен ăста ĕҫлекенсем, куԓттурлă вăйсем, хуҫалăх тĕлĕшпе ĕҫлекенсем, акрономсем, иншенерсем, техниксем тухтăрсем хатĕрлемелле, ҙăваш куԓттурине искусствине аталантарса йамалла“.

Хаԓ ĕнтĕ уйрăм ĕҫсене пăхар. Илер малтан хут пĕлменнине пĕтерессине. Кунта ҫакăн пек ҫитменлĕхсем ҙармантарса тăнă. Ҫак ĕҫ ҫине выранти оркăнсем ҫителĕкле пăхман, ала витĕр кăна пăхнă. Халăх куԓттурине хăпартас ҫĕрте ку ĕҫ пит пысăк выран йышăнса тăнине хăшпĕр ҫĕрте тавҫарса илейменни курăнат. Хăшпĕр районсенҙе пӳтшетра хут пĕлменнине пĕтерме панă укҫана вăл ĕҫе йаман, урăх ĕҫе йанă. Хăшпĕр йулташсем ҫакăн пек практĕккăна тĕрĕсе кăлармa ҫапла та калаҫҫĕ. Малтан йалхуҫалăхне ӳстерес пулат, кайран тин вара куԓттурă ĕҫне тытăнма йурат, теҫҫĕ. Капла калани тĕрĕс марри паллă. Хуҫалăхпа куԓттурă ĕҫне пĕр-пĕринҙен уйăрма йурамаст, вĕсене ҫыхăнтарса пырас пулат. Парттин XV-мĕш сйесĕ кун ҫинҙен ҫапла каланă: „Пилĕк ҫуллăх тăвакан планра пирĕн хулари тата йалти халăх куԓттурлăхне хăпартас ĕҫе хамăр ҫĕршыва интустрилес ĕҫпе ҫыхăнтармаллине шута илес пулат“. Ҫавăнпа ҫӳлерех каланă пек шутлани XV-мĕш сйес кăтартса хăварнине маннине пĕлтерет.

Хут пĕлменнине пĕтерес ĕҫ ҫине кирлĕ таран ҫавăрăнса пăхманни клас политтĕкне ҫирĕп тытса пыманнине те пĕлтерет. Хут пĕлменнисем хушшинҙе патраксем, ҙухăнсем нумайрах. Классен кĕрешĕвĕ вăйланса пынă ҙухне, епĕр ҙухăнсене орканисатсиленĕ вăхăтра, вĕсен куԓттурлăхне хăпартмалла, вĕсен хут пĕлменнине пĕтермелле. Ҫавăнпа хут пĕлменнине пĕтерес тĕлĕшпе пит вăйлă кĕрешӳ тапратас пулат. Комсомолăн, хут пĕлменнине пĕтерекен ушкăнăн, йалти уҙитлĕсен, шефсен—пурин те ҫине тăрса ĕҫлемелле. Ку ĕҫ хаԓхи вăхăтра пит ҙаплă, пысăк ĕҫ; куԓтпоххот тăвакансен ҫакна асра тытса тăмалла.

Ҫавнашкалах шкулсенҙе вĕрентесси пирки те. Ҫулран ҫул ҙухăн, патрак аҙисене вĕренме пулăшу пани ӳссе пырат. Анҙах ҙухăнсен аҙисем шкулсенҙен пĕтереймесĕр тухни хаԓ те сахал мар. Ҫавăнпа ҙухăнсемпе патраксен аҙисене пулăшас тĕлĕшпе йалти орканисатсисен ытларах ĕҫлемелле.

Шкулсем тавра ĕҫхалăхне пĕтĕҫтерес пулат.

Вăтам шкулсенҙе, профеҫҫи шкулĕсенҙе вĕренекенсене клас тĕлĕшпе пит лайăх тишкĕрес пулат. Ҫакăн пекех аслă шкулсене те клас тĕлĕшĕнҙен тивĕҫлисене анҙах йамалла.

Кивĕ йăласемпе кĕрешесси те пысăк выран йышăнса тăрат. Ҫĕнĕ йĕркесем нумай ҫĕрте ҫийеле тухма пуҫларĕҫ. Анҙах пирĕн пурнăҫра киревсĕр йапаласем нумайха. Ĕҫкĕ, тĕшмĕшсем, тĕн сĕрĕме тата ыт. те пурте вĕсем пире урараn кайалла туртаҫҫĕ, вĕсем сотсиалисăм тунă ҫĕрте ҙăрмантаракан йапаласем.

Хăшпĕр йулташсем шутланă тăрăх, ҙăваш респуплĕкĕнҙе ҫӳлталăкра виҫĕ мĕлйун тенкĕлĕх ерех ĕҫеҫҫĕ, тата ҫавăн ҙухлех сăри те кайат. Ҫак

пысӑк сийене хирӗҫ куђттурлӑ вӑйсем похӑота, вӑйла ҫапӑҫӑва тухмалла.

Науккӑпа искусствӑ ҫинђен пӗр-ик сӑмах. Науккӑра та кӗрешӳ пырат̆. Науккӑра ӗҫлекенсенђен хӑшпӗр пайӗ совет сойусӗнђи ӗҫхалӑхне хирӗҫ пынине Науккӑсен Аккатеминђе пулса иртнӗ суйлав та кӑтартрӗ. Халђи вӑхӑтра опшђествоветенинђе анђах мар, естествосананинђе тата ыт. те тиалектиккӑллӑ маттериалисӑмпа итеалисӑм хушшинђе кӗрешӳ пырат̆. Ђӑваш респуплӗкӗнђе ку кӗрешӳ ђӗлхе тавра тапранса кайрӗ. Иртнӗ ҫулла ђӑваш ҫӗршывне сӑнаса вӗренекенсен сиесӗнђе ҫапла калакансем те пулђӗҫ: Маркҫисӑм вӑл токматтисӑм, пур науккӑра та вӑл меттӑтпа усӑ курма пулмаст̆; ҫавӑн пекех маркҫисӑм ђӗлхе ӑслӑлӑхӗнђе те нимӗнле усӑ та параймаст̆. Ђӗлхеҫӗсем, ҫыракансем ҫакнашкал каланисене лайӑх астуса, пирӗн вӗсене хирӗҫ тухмалла. Кирек мӗнле науккӑра та итеалисӑм ҫавӑрса илсен, ӑна малалла кайма ђарат̆, тиалектиккӑллӑ маттериалисӑм меттӑђӗ анђах науккӑна малалла йама пултарат̆.

Вӗренӳллӗхпе Куђттурӑ Канашне суйлас пирки сӳтсе-йавнӑ ђухне хӑшпӗрисем, вӑл пире кирлӗ мар, тесе, сӑпса сӑхнӑ пек, сиксе тухрӗҫ. Ђӗрришӗн пуҫласа вилӗшӗн пӗтернисем те пулђӗҫ. Ҫапла та сырнӑђђӗ: „Ђӑваш ҫӗршывне вӗренекен ушкӑн урлӑ та вӗсене хамӑр ӗҫ ҫумне ҫыпӑҫтарма пулат̆". Камсене? Ђӑвашран профессӑра тухакансене. Мӗн йапӑххи пур кунта? Вӗренӳллӗхпе куђттур кханашӗ вӑл правиттелствӑ ҫумӗнђе; правиттелствӑ ӑна йертсе пырат̆, вӑл правиттелствӑ кӑтартса панӑ тӑрӑх ӗҫлет. Унта суйланӑ ҫынсене те правиттелствӑ ҫирӗплетет. Кунта патшалӑх науккӑпа сотсиалисӑм тунӑ ҫӗрте усӑ курат̆. Ҫак ӗҫе Ђӑваш ҫӗршывне вӗренекен ушкӑна пани, науккӑ ӗҫне патшалӑх хайӗн аллинђен ирӗклӑ ушкӑн аллине пани пулат̆. Вӗсен ӗҫ планне ҫирӗплетесси те, ӗҫне йӗркелесси те правиттелствӑран килмест. Ҫапла вара кунта ҫыхӑну та ҫителӗклӗ пулмаст̆.

Йулашки вӑхӑтра искуствӑ ђылай пысӑк утӑмсем тунине куратпӑр. Малашне вӑй пухас ӗҫе манмасӑр, искусствӑна ӗҫхалӑх хушшине сарма тӑрӑшмалла.

Литтераттурӑ пысӑк сийен — вӑл песҫимисӑм пурри. Ҫамрӑксенђен хӑшпӗрисем ку тӗлӗшпе халђ те ӑспу не йӗркелесе ҫитерейместӗха. Ку мӗнрен килнине пӗлес тесен, халђхи хамӑр ђӑваш хуҫалӑхне пӗлес пулат̆. Песҫемисӑм икӗ тӗслӗ сӑлтавран тухат̆. Вӑл сӑлтавсенђен пӗри – йал пурнӑҫӗ улшӑннипе, копператси, колхоссем ӳснипе вак пуршуаҫин пӗр пайӗ вырӑн тупаймасӑр, кирлӗ мар ҫынна тухса кайни.

Ђӑваш пиђетӗнђе шовинисӑм та палӑркаларӗ. Куна хирӗҫ вӑйлӑн кӗрешес пулат̆. Шовинисӑм куђттурӑ ӗҫӗнђе анђах мар, екконимиккӑ ӗҫне те куҫа пуҫларӗ Сӑмахран, Вантера илер. Автономи ҫинђен кхлаҫнӑ майпа, вӑл пролеттариат тиктаттури, Совет Сойусӗ пуррине мансах кайат̆. Уншӑн пулсан „натси принтсипе хаклӑрах". Мӗнрен хаклӑ? Сотсиалисӑм, комунисӑм тӑвассинђени? Паллах урӑх нимренте мар. Вантер вӗрентни—вак пуршуаллӑ натсионалисӑм. Ҫакӑн пек вӗрентни мӗнрен килет? Классен кӗрешӗвӗ вӑйланнӑ майпе, кулаксене, пупсене шеллекен интеликентси уйрӑм автономипе те йулӗђђӗ те, анђах пролеттариат тиктаттури ан пултӑр, вара вӗсене пурӑнма май пур, ҫавӑнпа вӗсемшӗн „натси принтсипе хаклӑрах". Ҫапла кӑлаҫнин тымарӗсем шаларах выртаҫҫӗ. 1917—1918-мӗш ҫулсенђе ђӑваш интеликентсийӗ „Куђттурлӑ автономи" лосункпе тухнӑ. Вӑл натсионалисӑма лайӑх кӑтартат̆.

Халђ те хӑшпӗрисем ӗлӗкхи йурруне пӑрахасшӑн мар. Акӑ мӗн каларӗ натсионалисӑм пирки XIII-мӗш конференции: „Хулара та йалта та вӑйланса пыракан клас кӗрешӗвӗ куђттурӑпа итеолоки йенӗсенђе палӑратех, вӑл хӑш ђухне натсионалисӑмпа шовинисӑмлӑ сулӑнђӑксем ђӗрӗлсе пынинђе те курӑнат̆, сӑмахран ун пекки Ђӑваш шкулӗ 60 ҫул тултарнине асӑннӑ ђух паларђӗ. Ҫавӑн пек сулӑнђӑксемпе хытӑ кӗрешмелле, вӗсене халӑха ҫутатса, ӑнлантарса памалла".

Тата, ђӑваш куђттурине аталантарма кирлӗ мар, ђӑваш ђӗлхи те нисҫта та кирлӗ пулмаст̆, ӑна вӗренме те кирлӗ мар, текенсем те пур. Ҫапла шухӑшлакансем техниккумсенђе вӗренекенсем хушшинђе тӗл пулкалаҫҫӗ. Ку тӗрӗс марри паллӑ. XIII-мӗш конферентси ку тӗлӗшпе ҫапла каларӗ: „Ҫав вӑхӑтрах тата конферентси ђӑваш куђттурине аталантарма кирлех мар тесе шутланипе кӗрешни, ҫавӑн пирки тӑнлантарса пани кирлӗ, тет. Натсиллӗ куђттурӑна аталантарассине ҫителӗклӗ хак хуманни—партти ҫав тӗлӗшрен йертсе пырассине наҫарлатса пӑрахнипе пӗрех пулса тӑрат̆", терӗ.

Парттин ђӑваш орканисатсийӗ куђттурӑ ӗҫӗнђе ҫирӗп йертсе пыђӗ. Конферентси иртнӗ оппыта шута илсе малалла тумалли сатаҫсене кӑтартса хӑварђӗ.

Ҫапла хӑшпӗрисем—„вӑл (натсиллӗ куђттурӑ тӑвасси) парттипе совет оркӑнӗсен кӑтартӑвӗсемпе постановленийӗсене хирӗҫ кайат̆", тени пӗртте тӗрӗс мар.

Халђхи вӑхӑтра куђттурӑпа итеолоки тӗлӗшпе ҫӗнӗрен ыйтусем лартма тивет. Вӑл ыйтусем тавра ҫӗнӗ куђттурлӑ вӑйсене пухса, вӗсене ӗҫе тӗрӗс кӳртсе пырӑпӑр.

**К. Н. Касакков.**





# Ҫулӑмри йал

**Повӗҫ.**

**Иссайӗв М.**

**(Йулашки).**

## VI. Ђашкӑрмара.

Пысӑк йал Ђашкӑрма: урлӑш ҫухрӑм, тӑршшӗ виҫҫӗ те пулаť. Пилӗкҫӗр утмӑл мӑрйе шутланаť. Вулӑс йалӗ.

Иккӗмӗш кун ӗнтӗ Ђашкӑрма ђашкӑра пуҫлани. Вулӑсри Советран хут килнӗ йала.

„Протрасверскӑ...
Ҫиђӗ пин пӑт...
Пухма ик ерне срук“.

— Ак тамаша! Мӗнле йапала? Нӳшлӗ пирӗн тырӑсӑрах йулмалла?...

— Халӑх пухмалла!

— Канашласа пӑхмалла!

Хапхаран хапхана хыпар кайрӗ йал тӑрӑх труках:

— Халӑх ҫине-е-е!...

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Пухӑнђӗ халӑх каҫхине. Халӑх пӳрђӗ ђӑк. Ђавса ҫумне ђавса, ниҫта ларма тӑма вырӑн ҫук. Сӗр-сӗр-сӗр сӗрлет пӳрт тулли халӑх. Кашнийех хӑйӗн сӑмси умне тем ӗнӗрлет, пуплет, туллашаť.

— Халӑх, ан шавлӑрха! терӗ Мӑйрака Серкки—йал канашӗн претҫетаттӗлӗ.

— Ан шавлӑр, ђарӑнӑрха ӗнтӗ,—терӗҫ хыҫалта ик-виҫ сасӑ харӑс. Халӑх майӗпе лӑпланђӗ.

— Халӑх,— терӗ Мӑйрака сӗтел хушшинђен хӑйӗн кађака сухалне малалла кӑнтарса,—пирӗн... вулӑсран хут килнӗ. Ӑрасвӗрскӑ пирӗн йала. Ҫиђӗ пин пӑт ҫурӑ тырӑ пухмалла. Ман пӗтрӗ. Кам мӗн калаť?—терӗ те, сӗтел кӗтессинђе ларакан Мерђен ҫинелле пӑхрӗ. Халӑх, ӳпре сыртнӑ пек, хумханса кайрӗ.

— Мӗнле тырӑ... кама?!

— Ҫиђӗ пин пӑт!...

— Кушак ҫмарти панђен тупатни ун ђул тырӑ?...

— Е-ее-ее, о-оо-ооо, у-уу-ӗ-ӗӗ!—тесе сӑрнайланђӗ халӑх пӳрђӗ.

— Пастайха, халӑх, ђарнӑрха, ђарнӑр!—тесе ҫухӑраť Мӑйрака, сӗтеле ҫава ҫӗҫӗ аврипе шаккаť. Халӑх аран-аран ӗрлеме пӑрахрӗ.

— Кунта вулӑсран... Мерђен йулташ сӑмах илет,—терӗ Мӑйрака, халӑх каллех шавласа кайасран хӑранипе васкаса.

— Йулташсем, хресђен халӑх! Расвӗрскӑ сирӗн йалшӑн анђах кӑларнӑ йапала мар вӑл. Пӗтӗм вулӑсӗпе, уйесӗпе пӗтӗм Раҫҫейӗпе ҫапла. Самани йӑвӑр. Йӗри-тавра шурӑ тӑшман. Хуласенђе, хапрӑк-савӑтсенђе етем выҫӑхаť. Пирӗн пек етемех... Хресђен памасан урӑх кам парӗ, камран илес тырӑ?... Совет влаҫӗ сиртен патшалӑх нуштисене саплама илет тырра. Хапрӑксавӑтсенђе ӗҫлекенсем вађђи, Хӗрлӗ ҫар вађђи кайаť вӑл тырӑ...

— Патшалӑха вађђи ..

— Пӗлетпӗр сире кӑмиссарсене!

— Ҫпеккуљантсене тырӑ кам сутаť?..

— Ытлашки ан пупле. Лайӑхрах итле!

— Мӗн ытлашши?! Тырӑ вӗсене! Хресђене мӗн? Ыйтасђӗ сиртен: мӗн паратӑр хресђене?!

— Хресђене картлики?!

— Спиђкӑ ҫук!
— Краҫҫин ҫук!
— Тӑвар ҫук!
— Ҫитсӑ ҫук!
— Сахӑр ҫук!

— Калӑрха, тархашшӑн, мӗн пур?!

— Ҫухӑр, Вађкка, хытӑрах, терӗ Кӗпӗрнатӑр Кӗркури алӑк патнелле туртӑнса, кайри сак ҫине хӑпарса тӑнӑ хура сухаллӑ ҫынна. Хура сухал илтмерӗ пулмалла, сухалне ҫаплах каҫӑртса тӑрса йулђӗ.

— Ай, ашӑ пулђӗ. Уҫӑ ҫӗрте ђӗлӗм туртса йарасха, тесе тухрӗ алкумне Кӗпӗрнатӑр. Ӑҫа ӗлӗк ђух, ӳсӗрӗлсен урам тӑрӑх—еп кам, еп кӗпӗрнатӑр! -тесе ҫухӑрса ҫӳренӗшӗн ҫапла йаť пачӑ.

Халӑх пӳрте шӑчӑҫайман пирки, алкумӗнђе те туллийех. Пӳрт алӑкне йарах уҫса пӑрахса итлеҫҫӗ. Йеким Раманђӑ та унта. Вӑл алкумӗн пӗр кӗтессинђе, ӗлӗк йалта каҫункка пур ђухне каҫункка ујӗнђен кайма пӗлмен, хаљ самокон ӗҫмесӗр кун иртермен, Урлаура Кӗркурине комуниссем ҫине ӑслаттарнӑ. Кӗпӗрнатӑр та ђӗлӗм ҫаварса вӗсем патне пырса тӑђӗ.

— Шӑлаҫҫи? терӗ Йеким Раманђӑ Кӗпӗрнатӑра.

— Шӑлаҫ!—терӗ Кӗпӗрнатӑр.

— Йапӑкаха тӑваҫҫи?

— Ҫапҫутах пулаť... терӗҫ виҫҫӗн-тӑваттӑн.

— Ҫутта кӑлараҫҫӗ вӗт!

— Ҫапла, пӳлмесене...

— Маншӑн пулсан хуť ҫитмӗл ҫиђӗ ӑрасвӗрскӑ тусан та пурпӗрех... Ман пӳлми те ҫук, тырри те ҫук. Хама та мӑнкунђен аран-аран ҫеҫ ҫитет. Арманшӑн ҫеҫ тарӑхас килет ман Совет ҫине,—терӗ Кӗпӗрнатӑр,—ҫук тырра та авӑртмалла мар вӗт. Акӑ ҫынран пӑт ытла ҫӑнӑх кивҫен илнӗха. Малашне паракан та пулмӗ.

— Тӗрӗс калаť Кӗпӗрнатӑр!—терӗ пӗри.—Пӗтмелле вӗт арман пирки. Мӗн пысӑкӗш йал—мӗнпурӗ пӗр ҫил арманӗ. Пӗлттикпӗлттик, пӗлтӗр-пӗлтӗр ҫаварнаť ђулӗ. Пӗрер ђӗптӗм анаť ҫӑнӑхӗ. Кӗтсе вырт унта ерни-ернипе ђерет ҫитессе.

— Аптрал кӗђухне.

— Ех, ӗлӗк, вутлӑ армана кай та ҫур сехет хушшинђе пӗр лав йухтарайса кил!

— Совет... тошӑ!

— Пырха, Хветут, кӗрсе ҫухӑрха ҫавӑнта арман пирки! сан сас пырасла вӗт,—терӗ Кӗпӗрнатӑр ҫамрӑкрах йаштака ҫынна, вут ђулӗпе ӑва шаккаса тивертесшӗн тӑрӑшса.

— Ђимха,—терӗ те Хветут алӑк йанаххинђен тытса пуҫне пӳртелле ђиксе йађӗ.

— Армана хӑҫан хута йараттӑр? Ес ҫавна кала!—терӗ Хветут. Хӑйӗн пысӑк сассипе, ыттисене путарса лартрӗ.

— Арман... ей...

— Ҫирӗм ҫухрӑма кайатпӑр.

— Латнӑ лаша пурри... лаша ҫукки мӗнле?

— Ҫӑнӑх ҫук.

— Толђков хуҫан хӑҫан пушӑ ларнӑ арман?!

— Армана хута йарӑр!...—тесе йарса илђӗҫ Хветут хыҫҫӑн ыттисем.

— Халӑх, итлӗрха! Мерђен арман пирки калас тет, терӗ Мӑйрака ӗнсине хыҫса.

— Калатӑр, тавай!..

— Халӑх, терӗ те Мерђен хӑйӗн кӑвак куҫлӑхӗ виттӗр пит ђейен шӑтарса пӑхрӗ,—армана хута йаратпӑр!

— Йараас! Йараас!... терӗ пӗтӗм халӑх.

— Протрасвӗрскӑна та пухмалла йышӑнас. Пурпӗрех тумалла ӗҫ,—терӗ Мерђен ҫавӑнтах.

— Йышӑнас! терӗҫ малта виҫ-тӑват сасӑ.

— Кирлӗ мар ӑрасверскӑ!—терӗҫ хыҫалтан.

Кӗпӗрнатӑр халӑх хушшинђен хӗсӗнсе маларах тухрӗ те:

— Халӑх!—терӗ шапкине хул айне хӗстерсе,—саккуна хирӗҫ кайас ҫук ӗнтӗ, рас патшалӑх хушаť, влаҫ хушаť итлес пулаť, унсӑрӑн йурамасť. Пӗтӗм тӗнђе ҫаплатӑк епӗр саккуна хирӗҫ

Алкĕпрăна пит лайăх пĕлет Мерђен. Такама та вĕрентнĕ ун формулĕсене. Ех, мĕншĕн алкĕпра формулăсем тăрăх пулмастши револютси? Шывсаманђе темне туса хурăђђĕ Мерђен. Тем пек йăвăр револютсиллĕ сатађа та шутласа парĕђђĕ. — Мĕн тăвас? Вĕрнес!...

Вĕренет Мерђен пĕђђен. Револютси тума вĕренет. Çĕрĕ-çĕрĕпе вулаŤ. „Капитала" ўпне ўпĕнтерет. Хăйĕн вĕренсе çынсене вĕрентмелле вĕт! Çавăнпа револютси сатађĕсене шутламашкăн алкĕпрă сатађĕсене шутлама пĕлнĕ пекех пĕлмелле. Нумай вуласа, сахал çывăрса Мерђен кăвак куçлăх тăхăнђĕ. Анђах кăвак куçлăх айĕнђен пĕр йапала та çухалас çук.



Çаралса йулнă шурă хурăнсем хушшинђе пысăк çурт лараŤ.

Мерђен Ђалпаппа каласса ларнă хушăра пўлĕме комуниссем килсе тулђĕç. Килђĕç пурте. Пĕр çын та йулмарĕ килменни. Мĕн пĕђĕкрен тĕрлĕ хуласечђе тĕрлĕ хуçасем патĕнђе ĕçлесе пурăннă Иван та килђĕ. Михал мĕн пĕђĕкрĕн йăвăр пуркăспа пурăнса, темиçе çул вăрçăра çўресе йăвăр ђирпе—ђаххуткăпа ђирленĕ. Вăл ђас та ђас хыттăн ўсĕрсе сурса пăрахаŤ. Ăна пурте Иван Иванђă тесе ђĕнеççĕ.

— Уçмалла пулĕ! терĕ Иван Иванђă Мерђене. Мерђен ларакансем çине пăхса илђĕ те:

— Тавай уçар,—терĕ ăна хирĕç.

Пуху пуçланђĕ.

Мерђен аллинђе Хусантан килнĕ телекрам.

Вăл ăна вуласа кăтартрĕ. Телекрамра çапла каланă:

„Сирĕн районран Хĕрлĕ çара пилĕк хута пĕлекен тĕреклĕ комунис йамалла. Ку телекрама илсенех виçĕ çын йарăр".

Хусан кĕпĕрнинђи Партти Комиттеђĕ, тесе алă пуснă айалта.

— Хĕрлĕ çара çын кирлĕ. Комуниссем фронтра питрех те кирлĕ. Виçĕ уйăх кайалла ултă çын йанине, хаљ пилĕк çын тупса йарăпăр. Çавăнпа йарас мар текенсем пулмĕç тесе шутлатăп, терĕ Мерђен.

Йамалла ара, йарас,—тесе шавласа илђĕç те, каллех шăп пулђĕ пуху.

Йамалла та... Каймалла таха... анђах комуниссем пурте пекех ваттисем, çемйеллисем тăрса йулнă. Çамрăккисем армине кайса пĕтнĕ.

— Кама йарас? Кам мĕн шутлаŤ, тавай калăр! терĕ Мерђен.

Шўреке Микихвер ĕлĕк çăмарта патĕнђе прикашђĕкре пурăннăскер Мерђен каласа пĕтерсенех:

— Есир пĕрмай пире... иртнинђе ултă çын... есир йултăр. Айта, пирĕн йышши кайтăр, шалккă мар,—терĕ. Ăна хирĕç темиçе сасă хар йарса илђĕç.

— Кама калан есĕ? Кам йулса пыраŤ? Кам кайасшăн мар?!

Ваççили Петровђă сиксе тăђĕ. Туллатнă кĕрĕкне йўле йанă. Сылтăм аллинђи пысăк ђĕлĕмĕпе Шўреке Микихвер йеннелле йунаса хĕрўллĕ сăмах каларĕ.

— Кам вăл çара кайасран пытанса йулаканни? Ес ху мари вăл?!—терĕ Ваççили Петровђă тўрех Шўреке Микихвере.

— Ман çемйе... терĕ шăппăнтарах Микихвер.

— Сан арăмупа пĕр ађу пур та, çемйе иккен? Ес вĕсемшĕн хăраса пурнатăн... Ес: Мерђен çемйесĕр, çапах çара каймасŤ, тесе каласшăн пулас. Мерђенĕн ђăках та хăйпе пĕрле çемйе çук. Анђах унăн çемйи хăйĕн йалĕнђе, кунтан инçе. Унăн та пирĕнни пекех арăмĕ те пур, ађисем те пур. Çапах та Мерђен сан пек çемйешĕн макăрмасŤ. Мерђен ик-виç хут та, çара йарăр, тесе ыйтнă пиртен—райком ђленĕсенђен. Ăна улăштарма пултаракан çын çукки, ĕç кумаййи йартармарĕ. Мерђен хаљ те кайма хатĕр. Акă вăл ун çинђен ĕнерех сайавлени парса хунă. Ваççили Петровђă кăсйинђен пĕр хут татки кăларса силлесе кăтартрĕ.

— Протрасвĕрскăна çуррине çеç пухнăха. Йулашкине кам пухĕ. Ун çинђен те шухăшламалла. Пĕр отретпе, пăшалпа çеç пулакан ĕç мар вĕт вăл. Кам каласа ăнлантарĕ халăха кирлĕ вăхăтра? Кам тĕрĕс çулран пăрăннă, хăравçă комуниссене çул кăтартĕ?! Ку таранђен пирĕн ку тĕлĕшпе Мерђен йулташ ырмиканми ĕçлерĕ. Мерђенпе пĕрле пирĕн органисатси пур ĕçре те тĕрĕс çул тупса пыђĕ. Шўреке Микихвер сăмахĕ суйа сăмах,—терĕ Ваççили Петровђă йулашкинђен.

Куçма паçăртанпах хăй кайма хатĕррине калас шухăшпа ним тума аптраса ђĕтресе лараŤ. Урисем ђĕтреççĕ Куçман, ђараймасŤ. Малтан тухса калама вăтанаŤ Куçма. —„Нўшлĕ пухăра манран çирĕпрех польшевик Хĕрлĕ çара кайма хатĕрри çук вара"?—тесе шухăшлаŤ Куçма хăй ăшĕнђен.

Çав хушăрах йалти нађђальнăй шкул уђитли сăмах илђĕ те тўрех:

— Йулташсем, епĕ ман вырăна ађасене вĕрентмешкĕн çын тупма пулĕ, партти тупса парĕ тесе шутлатăп. Çавăнпа çара кайма шалаŤ тăватăп. Унта епĕ кунтинђен усăллăрах пулăп. Епĕ кивĕ çарта та пулнă, мана вĕрентсе вăхат иртерес çук,—терĕ те ларђĕ.

Пурте ала çупса йађĕç.

Иван Иванђă сăмах илђĕ.

— Хаклă йулташсем,—терĕ вăл—есир пурте Совет респуплĕкне йĕри-тавра тĕнђери капиталăн тара тытнă йыттисем хупăрласа тănине пĕлетĕр. Епĕр вĕсене çапса çĕмĕрсен анђах çĕнĕ, лайăх пурнăç тума пултаратпăр. Вĕсене пирĕн çĕнтермеллех. Çĕнтермешкĕн мĕншĕн çапăçнине, камшăн йун тăкнине пĕлекен çар, тĕреклĕ çар кирлĕ. Çавăн пек çар анђах çĕнтерме пултараŤ. Хĕрлĕ çар çĕнтерўллĕ пултăр тесен, унта комуниссем нумайрах йамалла. Мĕншĕн тесен пĕр комуниссем анђах салтаксене Хĕрлĕ çар мĕншĕн çапăçнине ăнлантарса пама пултараççĕ...

— Епĕр виçĕ уйăх кайалла ултă çын йатăмăр. Татах йарăттăмăр ун ђухне, анђах пурне те йарса пĕтерме май çук. Кунта та ĕçлекен кирлĕ. Пирĕн тыл та çирĕп пулмалла...

— Акă йулташсем, еп хам та кайма хатĕр, анђах епĕ мĕншĕн кайма пултарайманнине есир пурте пĕлетĕр. Анђах епĕ ун вырăнне кунта, тылра пĕтĕм вăйа хурса ĕçлеме сăмах паратăп.



Альтиç картишне тухса ђылайђђен йупа çумĕнђе тайăнса тăђĕ...

Кам пăшал тытса фронта кайма пултараŤ, кайма ђĕнетĕп,—терĕ Иван Иванђă. Сăмахне каласа пĕтернĕ-пĕтермен ўсĕре-ўсĕре коритора тухса кайрĕ. Симĕс, йăвăр, çăра сурђăкпа пĕрле пĕвĕрленнĕ йун татăкĕсем те сурса пăрахрĕ.

Иван Иванђă ђĕререн каланă сăмах хыççăн Куçма тек ђăтса лараймарĕ. Ура çине тăђĕ те:

— Мана йарсан, епĕ ыранах тухса кайма та суклаç. Епĕ хатĕр... йарсан кайатăп,—терĕ Куçма. Каланă хушăра хăй ђĕкĕнтĕр пек хĕрелсе кайрĕ.

— Каралĕ, Мерђен йулташ, сăмах пар халĕ мана,—терĕ Салаххи çĕкленсе. Салаххи сарлака хулпуççиллĕ, вăрăм, тĕреклĕ тутар. Вунçиђђĕмĕш çулта патшана сирпĕтсенех фронтран тарса

килнĕ. Районра Октăпĕр революцсине туса иртерекеннисенĕн пĕри пулнă, çавăнтанпах милитсире çӳрет. Районра пирвайхи йаЧейккă уçăлсанах парттине кĕрет.

— Пăхăр, епĕ кăрăк пиллĕкре, çапах хĕрлĕ милитсире... Пăшала алăран пăрахмастăп. Пăшал тытма пурин те вĕренес пулат. Пăшал пирĕн алăра пулмалла йапала улă! терĕ Салаххи пĕтĕм вăйне пухса. Ун çамки çине кăвак тымарсем килсе тухрĕç.

Пилĕк çын вырăнне, фронта кайма хатĕррисем çиччĕн пухăнчĕç. Çиччĕрен пиллĕкĕшне суйласа илчĕ пуху. Вĕсем шутне Мерченпе Куçма тата Шуç Михал та лекрĕç.

Куçма хĕпĕртенĕ. Вăл та ыттисем пекех пăшал тытса курат вĕт... хĕрлĕ салтак пулат. Куçмасем виçминех кайаççĕ. Мерчен вăхăтлăха, пĕрер ернелĕхе ĕçсем пĕтерме, хăшне йĕркелесе хăварма йулат. Çапла йышăнчĕ пуху.

---

...Райком çурчĕ майпенех пушанса йулчĕ. Куçма та киле кайма тухрĕ. Алкумĕнче ăна Алтиç хирĕç пулчĕ.

— Сывпул Алтиç! Кайатăп,—терĕ Куçма.

— Ăçта?!

— Салтака...

— Çавăн пирки пулчĕйиха сирĕн пуху?

— Çавăн пирки.

— Кайакан çынна чарма çук ĕнтĕ. Сывпул!—терĕ Алтиç аллине парса. Куçма Алтиçĕн кăшт кăшăркарах, сивĕпе тăртаннă аллине тытса пĕр хытă чăмăртарĕ.

— Ыраттаран, Куçма!—терĕ Алтиç.

— Пултăр, асăнмаллăх...

— Йурĕçке,—терĕ Алтиç кулас килмесĕрех кулса.

— Чипер кайчă тĕлне пул!

— Пулăпи ĕнтĕ, пулмăпи...

— Пулăн та, пĕлес çук. Çапах... çырма ан ман!

— Ху манмасан?!..—Кăна каласан Алтиçĕн ирĕксĕрех тутисем чĕтресе кайрĕç.

— Ну, чипер йул Алтиç!—терĕ Куçма алкум алăкĕ урлă каçса.

— Чипер кай, Куçма!—терĕ те Алтиç ăна хирĕç, алăк хыçнелле пăрăнчĕ. Куçма урисем айĕнче хытă йур чĕриклетнĕ сасă та часах çухалчĕ. Алтиç картишне тухса чылайччен йупа çумĕнче тайăнса тăчĕ...

Хĕллехи тăп-тăрă уйăр каç. Тӳпери çăлтăрсем тем çинчен калаçса, пĕр-пĕрне вăрттăнла куç хĕсеççĕ.

Алтиç ăна асăрхамаст. Ун куçĕсене йăвăр шухăшăн тĕтрийĕ карса илнĕ...

## X. Алтиçпе Салаххи.

Райком çуртĕнче шăпах. Алтиç те кăнтăрла хутсемпе чупса ывăннăскер, хăйĕн, ĕлĕк улпутăн кухчă пулнă пӳлĕмри чăланне кĕрсе пуçне чикнĕ. Сыврат.

Тулта çанталăк урса кайнă. Шухăланнă çунатлă çил. Тăр-тартăр! чĕтрет тимĕр витнĕ пӳрт тăрри. Хăнк-хăнк! хăнкăр-ханкăр! хăнкăртатат тапхăр-тапхăр пӳрт тăррин листук.

— И-и-и-и-ишиш! И-и-и-и-ишиш!—шăхăрат çил мăрйере.

— Ууууувввввв! Ууууувввввв!—улат çил чӳрече умĕнче.

Таçта çӳлте, тӳпере тем çатăртатрĕ, туртăнчĕ, тискерĕн чĕриклетрĕ те кĕмсĕртетсе ӳкрĕ çĕре.

— Пӳрт тăррин листука сӳсе кайатĕ ĕнтĕ, ах тур!?—терĕ Алтиç вырăн çинчен çĕкленсе. — Пулат мĕн çил те?!—тесе чӳречерен пырса пăхрĕ...

Тулта такам алкум алăкне килсе шаккарĕ.

— Камши ĕнтĕ ку çĕр хута çӳрекенскер, тесе Алтиç алкумне тухрĕ.

— Кам вăл?

— Епĕ, Алтиç, уç!

- - Кам есĕ, кала йатна, терĕ Алтиç сасса уйăрса илеймесĕр.

— Епĕ, Салаххи!—терĕ тултан. Алтиç уçса кĕртрĕ.

— Ай-йай-йай, чут кăна суккăр пулаттăм. Тӳсме çук вĕçтерет, терĕ Салаххи алăк патĕнче урине милĕкпе шăлса. Тăлăпне хывса пăрахрĕ те, вăрăм усси çинчен пăр татăкĕсене хăпатахăпата ывăтма пуçларĕ.

— Ух, шăнтăм. Вилетĕп. Ăшăнасчĕçке, Алтиç! Хамăрăн кантселарине такăчĕ питĕрсе кайнă. Çавăнпа лашана унта хăварса хам кунта килтĕм... терĕ те Салаххи аллисемпе ăшă кăмака çумне пырса тайăнчĕ.

— Ăçтан килен вара есĕ капла çĕрхута?

— Мерчене ăсатса йатăм стантсăна. Фронта кайат... Пит лайăх çынчĕ вăл, пит лайăх йулташчĕ. Çавăнпа йулашкинчен уйăрлмалăх хам ăсатса йарам терĕм. Ах, йурататтăм еп ăна, шелмăна, терĕ Салаххи аллисене кăмака çумĕнче çавăркаласа ăшăтса.

— Астунă чухне парамха сана. Çакна ыран ирех поčтăна кайса пар. Телефонокраммă ку — арăмĕ патне. Стантсăра васкамипе йараймарĕ те, парса хăварчĕ,—тесе Салаххи Алтиç аллине пĕр хут татки тыттарчĕ. Алтиç илсе вуласа пăхрĕ. Хучĕ çине çапла çырнă:

„Киле пырасси пулмарĕ. Епĕ фронта кайатăп. Маншăн ан кулян, пĕччен мар, халăхпа пĕрле. Сывă пулсан, таврăнăп. Мишшана лайăх пăх, лайăх ӳстер.

Иксĕре те чуп тăватăп. Мерчен.

P. S. Пĕр-пĕр вырăна çитсен, атрĕс пĕлтерĕп".

— Лайăх çынччĕ çав, пĕр сивĕ сăмах илтсе курман епĕ унтан. Арăмне кураймасăрах кайрĕ иккен,—терĕ Алтиç.

— Алтиç, вĕри шыв пури?

— Çук.

— Сăмавар пури?

— Ăçтан пултăр ман сăмавар!

— Пĕркун вĕрететтĕнçке?

— Ун чух кӳршĕрен илсе килнĕччĕ.

— Вот-тăк фунт...

— Хуран пур вĕт! Вĕретес хуранпа. Вутă пури?



— Салаххи, ухмах!—тесе çухăрса йачĕ Алтиç Салаххине шинел çаннинчен йарса тытса.

— Пур та чĕрĕ.

— Тавай, хуранайне чĕртсе йарас.

— Ара йĕп-йĕпех вăл, çунмаст. Каç пулсан çеç илсе кĕтĕм.

— Тавай, вçоровно çунтаратпăр, терĕ Салаххи хавхаланса. Алтиç вутта кусарпа вакласа пачĕ. Салаххи вĕре-вĕре чĕртет. Çтена çумĕнчи пĕлтĕрхи восванисене çурса илсе çунтарса пĕтерчĕ. Вутти çапах чĕрĕлмест. Кăшт кăварланат те, пĕр-ик тапхăр йăл-йăл тукаласа кăшт сулăм хыпса илет те каллех сӳнет.

— Фу, чисти ывăнтăм. Сăмса тăрри тарласа кайрĕ вĕре тăркачă. Нӳшлĕ типпи çук вара сан, Алтиç? Пур таха сан, йури памастăн ес,—терĕ Салаххи куçне хĕссе.

Пысăк пӳрнипе Алтиçе хулайĕнчен тĕксе илчĕ. Алтиç, шарт сикнĕ çын пек, малалла сирпĕнчĕ. Çавăрăнса Салаххи çине тĕлĕнсе пăхрĕ.

— Ан хăра, тиместĕп. Типпине тупса парха ĕнтĕ! терĕ Салаххи йăлăнсах.

Йей пух, тур пур çук, пулсан ма парас мар. Мĕнле есĕ ĕненместĕн, Салаххи!—терĕ Алтиç хăйулланса.

Салаххи кивĕ плаккатсем çурса илме йураканнисем татах çуки тесе пăхкаланă хушăра, кăмака çумĕнчи кĕтесри çӳлĕк çинче выртакан икконсене курах кайрĕ. Вăл икконсене ку çурта улпутран тытса илсенех кĕтессенчен антарса кунта килсе хунă пулнă.

— Çиђђас йалкăштаратпăр, Алђтиç, ан куђђан,—терĕ Салаххи хĕпĕртесе. Икконсене çӳлĕк çинђен антарђĕ те, листукĕсене хăпăтса ђĕлме пуçларĕ.

— Салаххи, ухмах!—тесе çухăрса йађĕ Алђтиç Салаххине шинелђ çаннинђен йарса тытса.

— Мĕн?! терĕ Салаххи ун çине тĕлĕннĕ пек пăхса.

— Пĕтетĕн!... Ан ђĕл, ан çунтар! Аллу типсе лараť. Урасăр пулан. Суккăр пулан!...

— Мĕншĕн?!.

— Иккона çунтарма йурамасť. Турă...

— Ан лăпăртат. Мĕн турри пултăр унта. Хăма çеç вĕт улă!

— Турра ĕненмесне вара ес?!—терĕ Алђтиç Салаххи умĕнђен айккинелле пăрăнса.

— Сирĕн турра мар, хамăрăнне ĕненме те вăхăт çук ман.

— Хăвăр турруна ĕненетĕн пулĕха?

— Ĕненместĕп. Вĕсем пурте пĕр тăван. Мулласем те, пупсем те—пур йапала та турă ирĕкĕпе пулаť, теççĕ. Ĕлĕкхи саманара, ђăнах та, пурте çветтой турă ирĕкĕпе пулнă пулĕ çав. Мушиксене снавайсем патакпала хĕнесен те — турă ирĕкĕпе пулнă. Пуйансем ђухăнсем çинђе утланса çӳресен те, мăшкăласа кулсан та — турă ирĕкĕпе пулнă. Ав Никантăр хĕрĕн упăшки нимĕççемпе çапăçса икĕ урине те татса килђĕ. Макçăм муђи пĕртен-пĕр ывăлне çухатрĕ вăрçăра — вĕсем те турă ирĕкĕпе пулнă ĕнтĕ. Çапла ĕлĕк „турă ирĕкĕпе“ пĕтĕм ĕçхалăхĕ нушта курса, хĕнхур тӳссе пурăннă. Епĕр ун пек „турă ирĕкне“ пĕтертĕмĕр. Çавăнпа нимĕнле турра та ĕненместĕп! — терĕ Салаххи хыттăн. Иккон татăкĕсене пуçтарса вуђаха пăрахрĕ. Краскăллă типĕ хăмана шывсаманђе çулăм хыпса илђĕ. Çатăртатсах çунаççĕ иккон таткисем. Симĕсĕн те кăвакăн авкаланаť вуђахри çулăм.

Салаххи аттисене хывса нӳрленнĕ пиртлисене кăмака çумне типĕтме çакрĕ. Пысăк ђĕлĕмне кăларса тапак туртса йађĕ те, вуђахра иккон татăкĕсем йалкăшни çине тĕлĕрсе пăхса, тутарла йурă йурласа йађĕ.

* * *

Пĕр кун иртет.
Ик кун иртет.
Виç кун иртет.

Иртет ерне. Алђтиç пĕрмайах кĕтет... Салаххине турă курмалла вĕт!

Салаххи çав-çавах. Сывах.
Урисем те утаççĕ.
Аллисем те типсе хухмаççĕ.
Куçĕсем те суккăр пулмаççĕ.

— Ак тамаша! Тĕлĕнмелле йапала. Нӳшлĕ турă çуках вара?.. Алђтиç турă пуррине ĕненме труках иккĕленсе кайрĕ...

— Ех, мĕншĕн епĕ Куçмана çавăн ђух каламарăмши?!. Мĕнпур те çав Куçма турра ĕненменнинђен хăраса çеç, йуратни çинђен каламарăм вĕт епĕ ăна!..

— Çук, тӳссе пулмасť. Турри-мĕнни çăва çине. Кирлĕ мар, ĕненместĕп. Капла луђђă. Ыранах Куçма патне çыру çыратăп. Вăл çырма каланăђђĕ вĕт... Çыратăп, çыратăп, Куçма!—Çапла шухăшласа Алђтиç салтăнса çывăрма выртрĕ. Ех, аванçке кăнтăрлахи йăвăр ĕç хыççăн улăм тӳшек çине сарă кĕрĕк айне кĕрсе выртса канма! Хăйĕн ăшшипе йăпатса, кулленхи пурнăç шухăшне ђасах мантарса, сисмен хутрах çывăрттарса йаракан ђĕ вăл халиђђен Алђтиçе . Пайан апла мар. Пайан çывраймасť Алђтиç.

Алђтиç хăй пӳлĕмĕнђе пĕђђенех. Тараккансем анђах ăна йулташ, çурăлса пĕтнĕ шпалерсем хушшинђе кашăртатса ђупса çӳреççĕ. Урам йенђи ђӳређерен хĕллехи кĕмĕл уйăх пăхаť. Ун çуттинђе сĕтел çинђе ларакан шурă шуçран тунă ђейник сăмси йăлтăртатаť.

— Ах, Куçма, ђунăм! Пĕлетĕнши ес, еп сана мĕнле йуратнине?! Пĕтĕм вĕри ђĕрempe тӳсейми йурататăп сана, Куçма!... Тухма пĕлмест Куçма Алђтиç пуçĕнђен. Йурату туйăвĕпе килленсе выртакан Алђтиçе уйăх та пăхса ывăнђĕ пулмалла, ђӳређе умĕнђен пăрăнса кайрĕ.

# ЙАНТРАМАСŤ ТЕК КУПĂС УÇÇĂН...

Ех, йантрат
Таш çемĕ,
Уçăп,—
Тари-тари-тай-тăм!..
Ташă йухтăр
Сар хĕр Туççăн
Çавал шывĕ майлă...
. . . . . . . . . .

—

Сар хĕр Туççă
Пĕр ђĕреллĕ
Уçăп купăсăçпа.
Анђах
Çĕтрĕ ун телейĕ...
Ех, вăл пурăнăçпа!

Сӳнђĕ
Уçăп купăсăçăн
Çамрăклах кун-çулĕ.
Пит те йухрĕ уншăн
Туççăн
Йурату куççулĕ.

Йантрамасť тек
Купăс уççăн—
Йаш-хĕр шавĕ
Пушă.
Кунсерен пуç усрĕ
Туççă:
— Уçăп!
Ђунăм Уçăп!..

Ех, есех
Мана вĕрентрĕн—
Комсомолккă турăн.
Шухăша манне
Çĕнетрĕн,
Сĕнтĕн çĕнĕ утăм.

Манăн пурнăç
Иртнĕ ĕлĕк
Пĕђĕкрен хĕнхурлă...
Халĕ маншăн пултăр
Тĕлĕк—
Иртнĕ йăвăр хурлăх.

Ĕлĕк ђух еп
Каскăнланнă:
Тарçăра çӳренĕ...
Пĕђĕкрен
Ман пуç пăђланнă:
Турăна ĕненнĕ.

Тĕнђене усраť-тĕр
Турă,
Турă пархатарлă...
...Ђăннипех,
Вĕт пулнă
„Сурăх“
Суйа тĕнлĕ халăх!

Уçăпах
Ђăна калаťђĕ:
Турă
Çук вăл! тетђĕ.
„Ĕнкĕлсе“
Тек асăнаťђĕ—
Пире вĕрентетђĕ.

...Турăна
Етемлĕх тупнă,
Турă
Вăл пулман та.
Тĕттĕм халăх
Тĕлсĕр супнă,
Ултава курман та.

Çĕн тĕнђе
Тĕне пуçтарђĕ—
Ултава пĕтерђĕ.
Ђирĕкрен
Çĕн шкул уçтарђĕ:
Хут вĕренĕр! терĕ.

Çĕн етемлĕх
Çĕн тĕнђешĕн
Халђ тухаť шкул урлă.
Йалсенђен
Тĕн сирĕлсессĕн
Тин пулĕ
Кулђтурлăх...
. . . . . . . .

Ех, йуратнă,
Уçăп ђунăм,
Ма куçна ир хупрăн?!
Çĕнĕ пурнăçшăн ес,
Ђунăм,
„Иунлă ĕслĕк“*)
Тупрăн.

Астăватăп:
Ес ĕçлеттĕн,
Ывăнма пĕлместтĕн.
Комуна
Мана ђĕнеттĕн.
Ђунăм Туççă... теттĕн.

Саншăнахђĕ
Ман ђĕремĕм,
Санăнахђĕ,
Уçăп!
Пехиллетђĕ
Çĕнĕ çемĕ
Ђĕреме
Сан купăс.

Канлĕ вăхăт,
Кашнă каç ес,
Уй-хиртен килсессĕн,
Уçăп ђунăм,
Ђунтанах ес
Манпала пуплеттĕн...

Халђ те,
Халђ те астăватăп:
Çурхи каç...
Санпађђĕ...
— Сана,
Туççă,
Йурататăп...
Йурату çунађђĕ.

—

Пĕр çын мар еп,
Çамрăк пуçăм,
Иалта комсомолккă:
Комунра
Манпа халђ вуннăн,
Вунă комсомолккă.

Çĕн комунăн
Ĕçĕ çĕнĕ,
Ĕç ытамĕ анлă.
Комунра
Халђ епĕр çĕррĕн
Пĕрле тăванланнă.

Ушкăнпа
Ăнаť ĕç
Вирлĕн.
„Вут вăйсем“ те
Кӳрнĕ.
Вунă пусăллă уй-хирĕн
Усă
Ђăн та пур мĕн.

Уçăпах
Мана вĕрентрĕ—
Комсомолккă турĕ.
Шухăша
Манне çĕнетрĕ,
Сĕнђĕ
Çĕнĕ пурнăç.

—

Йантрамасť тек
Купăс уççăн
Уçăп купăсăçăн...
...Уçăпран
Пилленђĕ
Туççăн—
Çĕнĕ пурăнăçĕ.

**ЙАНКАС.**

Шупашкар, 28 ç.

*) „Йунлă ĕслĕк“ тесе ђаххоткăна каланă.

А. Тенилăвă фотто-ÿкерчĕкĕсем.



**Уйăп Мишши.**

## ЙĔЛТĔР ÇИНЕ!

Уйар кун; тăп-тăрă кăвак пĕлĕт çӳлте.
Хĕвел те пăхкалат̆ вăтанса.
Мĕн ларас çамрăксен пӳртсенђе хађ килте?
Уçăра, йĕлтĕрпе йарăнса
Ак, çӳретпĕр пайан тарăн вар хĕрринђе.
Сывлăш уçă! Хĕвел! Ех, аван!

Сивĕрен ан хăра хĕллехи кунсенђе,
Шур пашлак йур çинђе йарăнан.
Йăрăммăн-йăрăммăн йăр-йăр-йăр шунипе
Йĕр йулат̆ ђăсăлса кайалла.
Вĕçтерсе пыратпăр кайалла тăнипе
Йарăнса анатпăр айала...
Хăпаратпăр, каллех çак вăрман хĕрринђен
Сăрт питне йăрăммăн йĕр туса
Хĕвелпе йăлкăшан шурă мамăк çинђе
Йĕлтĕрпе ех, пыратпăр шуса!..
Ак, вăрман ман умра. Шур хурăн курăнат̆

Шăпăрланнă çӳçне салатса.
Тăрри çеç сулланат̆, çилпеле хумханат̆
Тӳр, йаштак хăй пӳне йăпатса.
Кашш! кашлаç йăвăçсем.Кассăн çилĕ вĕрет,
Пирĕнне питсене хĕретет.
Сывлăш уçă! Хĕвел çамрăка сăн кӳртет
Сивви те хăлхана ђĕпĕтет.
Уçă сывлăш, хĕвел—сывлăха сыхлама,
Атăр, йĕлтĕр çине тăратпăр!
Ей, пурте çамрăксем, йĕлтĕрпе йарăнма!
Çирĕп, сывлăхлă çынсем пулатпăр!..

**И. Тукташ.**

◆◆◆

Сиксе тăтăм хытă сак çинђен,
Шухăшсем вĕçсе кайрĕç инçех...
Вăрансам, аттеçĕм, вăран
Ĕмĕр хурлăх пуснă ыйхăран!

Хађхи пурнăç питĕ те васкав.
Кăшкăрассăм килђĕ сасăпах:
Вăрансам, аттеçĕм, вăран
Ĕмĕр хурлăх пуснă ыйхăран!

Ман аттешĕн пурнăç—ултав...
Выђăхсем макăраççĕ тулта.
Вăрансам, аттеçĕм, вăран
Ĕмĕр хурлăх пуснă ыйхăран!

Ах, аттеçĕм, мĕскĕн тĕнђере
Мăшкăл тӳсрĕ çавă сан ђĕре.
Вăрансам, аттеçĕм, вăран
Ĕмĕр хурлăх пуснă ыйхăран!

Пахђара—хăлтăр-халтăр кĕлет,
Тайлăк пӳрт кунсерен ишĕлет...

Вăрансам, аттеçĕм, вăран
Ĕмĕр хурлăх пуснă ыйхăран!

Çулсерен унăн хĕсĕр уй-хир,
Çийĕнђе—çĕтĕк-çатăк тумтир.
Вăрансам, аттеçĕм, вăран
Ĕмĕр хурлăх пуснă ыйхăран!

Кӳршĕсем çывăрмаççĕ. Ирех
Хапăлларĕç комунлă хире.
Вăрансам, аттеçĕм, вăран
Ĕмĕр хурлăх пуснă ыйхăран!

Трактăрсем çĕмĕрлеççĕ уйра,
Ман аттейĕн—ишĕлнĕ сухах.
Вăрансам, аттеçĕм, вăран
Ĕмĕр хурлăх пуснă ыйхăран!

Ăнланмаст̆ çав мĕскĕн ват атте
Çĕнĕ пурнăç вăйĕ-хăватне...
Вăрансам, аттеçĕм, вăран
Ĕмĕр хурлăх пуснă ыйхăран!

**Йехрим Иванĕ.**

## ХĔР ЙУРРИ.

(*„Сама садик я садила“ кĕввипе*).

Аслă улăхпа пыратăп
Пуçа кĕђĕ иртнĕ каç.
Комсомол пулма хăратăп—
Атте-аннесем вăрçаç.

—Мĕн шуйтанĕ, кăсамулĕ,
Мĕне кирлĕ вăл сана?
Пĕтĕм йал санран çеç кулĕ,
Йату кайĕ таврана.

Ан та асăн, аскăн хĕрĕм,
Вăл ĕç пулмĕ нихăçан;
Йе тусассăн хытă йĕрĕн
Шӳсе çакнă пушăран.

Ху шутлаха, çĕр çăтасшĕ,
Тем калаçĕç йал çинђе.
Йе каймасăр пурăнасшăн
Аçу-аннӳ килĕнђе!..

Ђăтаймарĕ çамрăк ђунăм,
Кăлтах сикрĕ йаш ђĕре:
—Комсомолшăн вăркат̆ ђунăм,
Вăл çеç хаклă тĕнђере.

Çапла петĕм пĕр сехресĕр
Атте-анне сăмахне.
Ķирлĕ мар мана хĕресĕ,
Ĕмĕр шанмăп çăтмахне.

Хут̆ те мĕн калађђăр, маншăн
Комсомол хисеплĕ йат.
Çамрăк ђунăм çĕнĕ йалшăн,
Ђунăм уншăн таварат.

Епĕ КИМ-шăн, еп комуншăн,
Шухăш сирĕл турăран.
Тек ђура мар епĕ уншăн—
Комсомолккă пулăран!

# Ӳкӗнӗҫлӗ йурату.

*Тутар поэтӗн* **Такташ** *ҫырнинчен* **Шелепи** *куҫарнӑ.*

Ҫамрӑк,
Ёмӗр кӗске санӑн...
Ҫав-тӗр кӗске пек туйнаӑ.
Каҫпа ларнӑ хитре ҫеҫек
Ир пулаҫҫен шаннӑ пек.
Йурату вӑл—
Питӗ кивӗ йӑла.
Анҫах, пур ҫамрӑкра та
Ҫӗнелет вӑл йапала.
Ҫӗрене вӑл вут пек ҫунтараӑ.
Ҫамрӑк уншӑн ҫунне те параӑ.
Вутлӑ ҫамрӑклӑх...
Вилнӗ йуратусем—
Урӑх нихҫан та ҫӗрлес ҫук вӗсем.
Сӳнҫӗҫ ӗнтӗ вӑл вӑхӑтсем.
Халӗ
Тупа туса ӑнтӑхса
Уйрӑлтӑм еп вӗсенҫен.
Аскӑн шухӑш ҫухалҫӗ пуҫ ҫинҫен.
Ирӗклӗх ҫиккине сыхлама,
Пуҫлӑх туса хутӑм ӑсӑма.
Йурату шухӑшсем халҫ мана,
Килес ҫук вӗсем халҫ асӑма.
Ӑс пуҫлӑх пулнӑ кунтан вара,
Сыхланмӑп ун пек кирлӗ мара.
Иртнишӗн те ыратаӑ пуҫӑм.
Кунӗн-ҫӗрӗн йӗрет ҫӗреҫӗм!
Халӗ ӗнтӗ куллен кун пуҫӑма
Ӑс пуҫлӑхӗ вӗрентет ӗҫ тума.
Вӗрентӗм ӗнтӗ халҫ пурӑнма,
Кирлӗ мар ӗҫсенҫен пӑрӑнма.
Ех, ес ҫамрӑклӑх...
Ех, ӑссӑр ҫамрӑклӑх!
Ҫав-тӗр кӗске пек туйӑнатӑн.
Каҫран ҫеҫеке ларнӑ пек пулатӑн,—
Ир пулаҫҫен есӗ тӑкӑнатӑн.
  Вут-ҫулӑм пек вӗри вӑхӑт
Иртрӗ ӗнтӗ;
Манӑн ҫеҫек сӳнҫӗ.
Ӑс пуҫлӑхӗ мана ҫӗнҫӗ!
Халӗ ӗнтӗ ыттисем йуратҫӗр.
Вӗсем унпа халҫ савӑнайҫӑр.
Хам еп...
Еп тупа турӑм вӑл ӗҫрен:
Ун пек йуратуран хытӑ писрӗм,
Пурӑнӑҫ майне лайӑх сисрӗм.
Вӑл вутпа ҫунакан ҫӗресенҫен
Хӗрринҫен ҫеҫ пӑхса, кулса ҫӳрем...
Епӗ ун пек пулас ҫук ҫӗнӗрӗн.
  Ҫапах та, хӗрсем,
Манран пӑртак пӑрӑнса ҫӳрӗр.
Ман тупа тунине ан ҫӗмӗрӗр.
Йе хӑшӑр та пулсан пӗри йуратса,
Ан аҫашлӑр, ҫӗрене хӑратса.
— Ҫук ҫавӑ...
Вӑл вут халӗ
Ӑс хуҫине пӑхӑннӑ.
Ана халӗ манран никам та,
Илейес ҫук ӗнтӗ нихҫан та,
Ҫавӑнпа епӗ лӑпкӑ кӑмӑлпа
Йурлап халӗ ҫапла савӑнса...
Сӑпанипе напоршӗка*) асӑнса.

---

**Сӑпани сӑнӗ.**

Хӑш ҫухне, темшӗн,
Йулташ патне пырсан,
Калаҫма сӑмах тупмалла мар.
Те хӑймастӑн, те вӑтанан?
Сӗтел ҫинҫен аҫломне илсе,
Сӑнӗсене пӑхма тытӑнан.
  Ҫапла йутшӑнса тӑнӑ ҫухне,
Куҫсем пӗр ӳкерҫӗк ҫине ӳкеҫҫӗ.

Унӑн хура кӑтра пӗлӗт пек ҫӳҫсем
Ҫӗре патне йӗппе ҫикеҫҫӗ.
— Ку кам? тетӗн,
Ху—вӑл камне сисетӗн.
Вӑл ара, тутипе йӑл кулса:
— Ку ӗнтӗ аҫа амӑш пулнӑ,
Маттурҫӗ... Ҫамрӑкла каҫҫа карӗ,
Тен, ӗнтӗ темиҫе аҫа та турӗ,—
Тесе калаӑ мана.
— Е... есӗ улталани.
Пӗлтерес мар ӑна, тет.
Халӗ йепле вӑл тесе,
Сӑн ҫине пӑхса тӑратӑн.
Аҫпом питне хупса хуратӑн.
— Маттурлӑх ҫапла вӑл:
Хӗрсен—питҫӑмарти ҫинҫе хутланаӑ,
Арҫынсен—сухал-мӑйӑхпа хупланаӑ.
Йурату вӑл—
Йе кӗтмен ҫӗре илсе пыраӑ,
Йе САКС-пала ҫыхса хураӑ.
— Аҫпом куҫ умӗнҫе ҫухне
Сӑпани сӑнне
Пурте: ку кам? теҫҫӗ.
Епӗ вӗсене хирӗҫ:
— Маттур хӗрҫӗ,
Комсомолккӑҫӗ.
Пӗтӗм ҫынна куҫран пӑхтарҫӗ.
Вӑл пӗр напоршҫӗке йуратнӑ.
Унпа вӑл аҫа та ҫуратнӑ,—
Тесе, вӗсене каласа парап...
Унтан сӑмаха пӑрса йарап.

**Сӑпанийе.**

Сар кайӑклӑ ирсем,
Симӗс хирсем...
Хитре ҫеҫексем, шӑпҫӑк сассисем...
Ҫу пек ҫемҫе ҫу кунӗсем
Сӑпанийе канлӗх памарӗҫ,
Ун савнине асран йамарӗҫ.
Ҫуркуннехи кӑвак пӗлӗтре
Ҫӑлтӑрсем выҫарӗҫ пит хитре.
Анҫах ун ҫӑлтӑрӗ ҫук унта.
Унӑн ҫӗри ҫунаӑ ҫавӑнпа.
Ӑна ним памарӗ ҫуркунне...
Ун ҫеҫекӗ ҫуралҫӗ кӗркунне.

---

Питӗ йурлас килет ҫакӑ йурра,
Тем пек кӑмӑла кайаӑ вӑл мана.
Питӗ курас килет ҫун савнине,—
Сассипе аҫашлаӑ хӑлхана.

---

— Сӑпани, пайан кантура кай!
Санӑн савни унта пулмалла.
Унта вӑл токлат тумалла.
Ес унта, Сӑпани, каймалла.
Вӑл сана халӗ каллех унтан
Ӑсатса йарӗ тытса аллунтан.
Пит инҫе ан ҫӳре ес унтан?
— Сӑпани, кай пайан театтӑра!
Унта куратӑн ес вӑл маттура.
Унпа пӗрле ес те ҫӳрӗн...
Пӗр шухӑш пулмалла сирӗн.
— Сӑпани, ан кай пайан театтӑра!
Ан йер, хӗрӗм, вӑл маттура.
Вӑл ҫӑмӑлттайсене ан сыхлан,
Асту... вӗсене ан сӑхлан.
Вӗсемпе ес тем курӑн.
Асту, Сӑпани, лайӑх пурӑн.

---

Ак пӗрре
Савнӑ напоршҫӗкӗ ӑна,
Илсе кайаӑ хӑй патне хӑнана.
Вӗсем унта иккӗш ҫех ларнӑ.
Кантӑксене ҫаршав карнӑ.
Пӳлӗмре вут ҫути сӳннӗ.
Вӗсем вырӑн ҫине тӳнӗ.

Йурату питӗ хӗрӳ пулнӑ...
Ҫавӑнпа вӑл хыпар йулнӑ.

---

Вӑл каҫ уйӑх ҫӳлте пӗр ӗҫсӗр,
Вӗҫсӗр-хӗрсӗр ҫулпа ҫаврӑннӑ.
Вӑл каҫах Елексӗй ҫула тухса
Кашкӑр курса тарса таврӑннӑ.
Ҫав каҫах Кимай, йыт вӗрсен те,
Хӑйӗн тутлӑ ыйхинҫен вӑранман.
Ҫав тӗттӗм каҫхине вӑрӑ Шаккур
Унӑн кӑвак ӑйрине вӑрланӑ.
Ҫавӑ каҫах Сӑпани ҫухалнӑ...
Аппӑшӗ ҫурҫӗрҫен шыранӑ...
Ҫуртра пулнӑ Матви.
Пӗр студент. Пӗр пӗҫҫен.
Унта йӗнӗ сасӑ илтӗннӗ:
Матви... ҫунӑм савни... йар! тенӗ.

---

Уйӑх анса хӗвел те тухрӗ,
Сӑпани ҫине ӑшшӑн пӑхрӗ.
Сӑпани ҫапах ӗҫе каймарӗ.
— Йепле ҫын куҫне курнас, терӗ.

**Сӑпани ҫырӑвӗ.**

— «Килетӗп терӗн те, килместӗн.
Ман ҫӗре ҫуннине пӗлместӗн.
Тупа тӑва-тӑвах шантартӑн.
Халӗ ӗнтӗ, туссӑм, ма тартӑн?
Куҫҫуҫпе ҫырап ку ҫырӑва,
Калаҫас сӑмахсем пур санпа.
Питӗ кирлӗ ес ҫавӑнпа.
Ех, туссӑм... мӗншӗн писетӗн?..
  Кӗтетӗп?
Ком. салам... Сӑпани».

— Анҫах,
Пур пӗрех вӑл килмерӗ.
Ӑнтӑхнине асне илмерӗ.
Халӗ ӗнтӗ манӑн мӗн тӑвас?
Ӑҫта кайас? Ӑҫта пытанас?
Ҫук, ҫук... мӗншӗн халӗ вӑтанас?
Хӑвӑртрах ӗҫлеме тытӑнас.
  Пит хӑрушӑ кунсем сисӗнет:
Хӑй йуратса хӑйех сивӗнет.
— Мӗн курӗши пуҫӑм? Питӗ хӗн!..
Кун пек мӑшкӑл та пулӗ мӗн?

---

Сӑпани амӑш кӗпе ҫӗлет:
Ҫике-ҫике туртаӑ йӗппине.
Сӑпани йӑмӑкӗ вӑйӑ выҫаӑ...
Ай-йай, маттур!..
Сӑпани пекех пулаӑ.

**Сӑпанипе уйӑх.**

Уйӑх та пӗҫҫен,
Пирӗн Сӑпани те...
Таҫта ҫӳрет унӑн савни те.
Хӑйне ҫунтан савни, ҫун илес тет...
Ҫикет халӗ ҫӗлен сӑннипе.
Сӑпани халҫ пӗҫҫенех хуйхӑраӑ.
Нимӗн тума та ҫук; ҫун хӑраӑ.
  Йалан кулса тӑнӑ пысӑк куҫӗсем,
Йунлӑ куҫҫуҫпеле шывланаӑ.
Йун тымарсем тӑрӑх йунсем ҫупса,
Ҫӗре патне пырса капланаӑ.
Пиҫӗ тӑрӑх куҫҫуҫ йухса анса,
Пӑт-пӑт туса тумлаӑ ҫӗрҫине.
Ех, ку ҫамрӑклӑх... Ех, ку савнӑ тус!
Тӗнҫе мӑшкӑҫ тӑваӑ хӗрсене.
Ех, ес, ҫамрӑклӑх...
Ех, ӑссӑр камрӑҫлӑх!..
Ҫав тӗрлӗ кӗске пек туйӑнтӑн.
Каҫпала есӗ ҫеҫеке ларса,
Ирҫен тӑкӑннӑ пек ҫех пултӑн.

---

*) Напоршҫӗк—типокрафире саспаллисем пуҫтаракан.

### Сӑпани.

Ех, ђӗрем...
Йепле утса ҫӳрем?
Ӑҫта кайса кӗрем?
Ђӗрем!..
Ҫун ес... Ҫун, ђӗрем!
Кун-ҫул санӑн ҫапла пулнӑ.
Есӗ ҫавӑ ытлашши кулнӑ.
Есӗ, тата ђунтан савап тени...
Атте пулмалли ӑҫта ӗнтӗ?
Ех, есӗ... ку вӗтӗ сан ӗҫӗ!
Ҫапла пулђӗи сан йуратни?
Ҫӗнӗ пурнӑҫ тӑватпӑр, тени.

Каҫран ҫуннӑ вутсем ирпе сӳнсен,
Каҫ пулсассӑн каллех ҫутӑлаҭ.
Сӑпани ђасах ађа ҫуратаҭ.
Хӑйӗн напоршђӗкне асӑнаҭ.
Акӑ ађа ваљђи кӗпе ҫӗлет:
Ђике-ђике илет йӗппине.
Хӑйне улталанӑ напоршђӗкне
Вӑрҫа-вӑрҫа туртаҭ ҫиппине.
Асту, Сӑпани! йӗппӗне ан хуҫ.
Йепле пулсан та тӳс. Кӑмӑлна уҫ!

### Усал ҫил.

Урам тӑрӑх ҫил пӗр ӳсӗр ҫынпа
Ҫухӑрса ҫӳрет кунӗ-ҫӗрӗпе.
Канма та пӗлмест вӑл, лӑпланмасҭ те.
Ыйхи те ҫук, ӗҫкӗн хӗрӗвӗпе...
Авӑ ватӑ Тимук,
Ват супнӑ!
Ҫурђӗ умӗнђе пӗрмай йур хыраҭ...
Ӑшша пиҫсе, ҫӗлӗкне хывса хураҭ.
— Ку мӗн хаљ... Мӗнле пулђӗ ку хӗл?
Куҫ уҫма ҫук... пӗрмай ҫиллӗ тӑман.
Уйӑхпе пӗр лайӑх кун пулман.
Урампа ҫӳреме ҫул йулман.
Ҫиллӗм килет усӑсӑр ӗҫшӗн...
Хыра-хыра халран кайатӑп.
Хула ҫӗклейми пултӑм ӗнтӗ.
Пӗтӗм шӑммӑм-шаккӑм ыраҭаҭ.
Кавкас тӑвӗ пек хӳсе кайаҭ;
Куҫпа пӑхсан ђуна хӑраҭаҭ;
Кунӗ-кунӗпе йур купалаҭ.
Ват пуҫӑмпа тухап хырмашкӑн.
Хырас марђӗ, хапха уҫӑлмасҭ.
Урӑх ҫул ҫук, ниҫтан тухмашкӑн.
Еп купалап, ҫынсем таптаҫҫӗ.
— Мӗншӗн хыран, Тимук пиђђе? теҫҫӗ.
— Ҭфу! Ку, хаљхи ҫамрӑк-кӗрӗм.
Мӗн туса ҫӳреҫҫӗ пӗр ӗҫсӗр?
Терӗ те, вӑрӑм-вӑрӑм пусса,
Урам тӑрӑх карӗ хашкаса.

Шурӑм-пуҫпе урам хыракансем
Пурте ҫиле хытӑ вӑрҫаҫҫӗ.
Ҫунапала иккӗн урампала
Ђуптарса иртнине кураҫҫӗ.
Ҫавӑн ђухне пирӗн Сӑпанийе
Пуљнитсана илсе карӗҫӗ.
— Хайхи Сӑпанийе ађа тума
Илсе карӗҫ ӗнтӗ, терӗҫӗ.

— Ӑҫта ӗнтӗ есӗ,
Атте пулмалли ҫын?
Ҫаплаим ӗнтӗ сан йуратни?
— Ех, Сӑпани! Савнӑ комсомолккӑ!—
Сана ђунтан савап тенисем...
Икӗ аллупа хыт ыталаса
Ӑнтӑхнисем, тупа тунисем
Ӑҫта ӗнтӗ хаљ сан вӗсем?

### Йурату вӗҫӗ.

Йун ӑшӗнђе выртакан Сӑпанийе
Вырӑн сарса майласа вырҭарђӗҫ.
Шур минтер ҫине пуҫне хуђӗҫ,
Карђӑксем умне пырса тӑђӗҫ.
Куҫ хӗррисем кӑн-кӑвак кӑвакарнӑ,
Тутисем ун хӑрӑм пек хуралнӑ.
Вилнӗ пек выртаҭ нимӗн ђӗнмесӗр,
Мӗнсем пулнине асне илмесӗр.
  Акӑ ӑна пӑртак ӑн кӗрет.
Тем пусса тӑнӑ пек туйӑнаҭ.
Ађа хурлӑхлӑ йӗнӗ саспа
Ђӗри панђе сулӑм йавӑнаҭ.
— Ах, ђимха,
Ађа макраҭ вӗт!
Кам ађиши вӑл?
Хӗрши, ывӑлши?
— Ывӑл, ывӑл!
Ашшӗн сухалӗнђен
Ҫакӑнаканни вӑл.
— Ытла хытӑ макраҭ,
Ђарасђӗ ӑна?
Мӗнле ђармаллаши?
Ех, ђӗрем!
Йепле тӑрса ҫӳрем?
Ђим халӗ,
Мӗншӗн ку капла—
Куҫ умсем тӗттӗм апла?

Ак вӑл хускалса йерипен тӑђӗ.
Вилнӗ ҫын тӑрса ларнӑ пек пулђӗ.
— Ех, сасси,
Ђуна кайса тивет,
Анне пулнине мӗн ҫитет?
Хӗрарӑмсен мӗн пур маттурлӑхӗ
Ађа амӑш пулсан тин сисӗнет.
Йепле хаљ ашшӗ ађинђен сивӗнет?
Ађа сасси ҫурт илемне кӳрет.
Ех, ун ашшӗ, ӑҫта кӑна ҫӳрет?
Мӗншӗн халӗ вӑл кунта килмест?
Ех, ӑна... хӑй ађине пӗлмест.

Акӑ тулта лапкан-лапкан
Ҫерҫи пуҫ пек йур ҫӑваҭ.
Ун ӗнтӗ хаљ хӗллехи пек
Сивӗ пулма хӑват ҫук.
Халӗ ӗнтӗ лӑп ҫил вӗрет,
Хӗл сиввине ҫӗмӗрет.
Ӑшӑ ҫилтен хӑранипе
Сивӗ йур та ирӗлет.
Ак хӑвӑртах йур айӗнђен
Сиксе тухӗ ҫу уйӑхӗ.
Сывлӑшра та, ҫӗр ҫинђе те
Йӑшӑлтатӗ ђӗр-ђун йӑхӗ.
Урамра
Ҫуркунне килессе пӗлмесӗр
Йӗрсе лараҭ Пҫи*) ывӑлӗ.
— Ан макӑр ҫука,
Аҭа ман пата!
Хӑна тӑвӑп ҫупа.
Тӗнђе вӑл питӗ илемлӗ йапала...
Сана епӗр пӑхӑпӑр йалпала.
Улталамасан, сийен тумасан,

*) Пҫи—кушак.

### Вӑрламасассӑн пӗрле тӑрӑпӑр.

Анну таҫта кайнӑ... сана пӗлмест...
Аҫу вӑл сана асне те илмест.
Хурӑнташсем те хурӑн тӑрринђе—
Пирӗн патра пурӑнӑн ђӗрҫинђе.
Аҭа!
Вилмӗн халӗ епӗ пурринђе.
Йал вӗт ку—йалта ҫерҫи те вилмест.
Кунта ес никама та пӗлместӗн—
Ҫапах та, ађам, есӗ вилместӗн.
Ҫапла вӗт, шӑллӑм!
Сирӗн Пҫи халӑхсем
Ађасене пӑрахса хӑвараҫҫӗ.
Йытӑсем, кашкӑрсем, упасем,
Ҫынсем те ҫавӑн пек тӑваҫҫӗ.
  Ҫапах та хаљ пирӗн Пҫи халӑхсем,
Мӗн пулсан та ђӗрӗ ҫуралаҫҫӗ.
Ҫапла ҫынсем нумайӗшӗ
Хырӑмра ђухнех ҫухалаҫҫӗ.
Ађа ҫуралассинђен хӑраса
Йе пӑвса, йе им ӗҫсе вӗлереҫҫӗ,
Хулара ваттӑрсене те переҫҫӗ.
Йе хӑйсене хӑйсем пӗтереҫҫӗ.
— Аҭа, кайар!
Манӑн ҫамрӑк ђухне
Пҫи тусӑмсем нумайђђӗ.
Умӗсенђе сӗтпе хӑймађђӗ.
Есӗ те ҫапла тус пулӑн—
Ӑслӑ пулсан ӗмӗр тӑрӑн.

Ађа макраҭ,
Пӗтӗм ҫурта йан йараҭ.
Тин ҫуралнӑ ађа сасси...
Вӑйӑ мар ҫав ађа тӑвасси—
Тӗнђене пӗр ђун хутшӑнаҭ.
Амӑшӗ ҫумне йӑпшӑнаҭ.

Кам ађи вӑл?
Мӗншӗн вӑл йӗрет?
Ашшӗ ун ӑҫта ҫӳрет?
Ма курма килмест хаљ
Ӑна тунӑ ашшӗ?
Ех, мур ҫапашшӗ!
— Ашшӗ ун, тен, ӗмӗр килмӗ.
Ывлӗ ӑҫта тӑнине пӗлмӗ.
Ывӑлӗ ӳсӗ, маттур пулӗ,
Ашшӗ курсан—кӑмӑлӗ тулӗ.
Ах, ҫук!
Ашшӗсӗр вӑл канлӗ ӳсеймӗ.
Ашшӗ ђӗри курмасӑр тӳсеймӗ.

  Акӑ алӑка уҫса пӗр ҫын
Йерипен Сӑпани патне пыђӗ.
Ађи ҫине ђӑр! пӑхса илђӗ,
Куҫне аллипе хупласа тӑђӗ.
— Сӑпани, каҫар мана! тесе
Пуҫне Сӑпани ҫине хуђӗ.
  Килӗшрӗҫ вӗсем. Майлашрӗҫ ӗҫсем.
САКС-па пӗрлешрӗҫ пурнӑҫӗсем.
Ҫакӑ пулаҭ Сӑпанипе напоршђӗк
Йурату сӑввисен вӗҫӗсем.

**Ретаксирен:** «Ӳкӗнӗҫлӗ йурату» (Маххапет тевнессӗ) тӗрӗксен, уҫпексен, Крымри тутарсен ђӗлхипе те ҫапӑнса тухнӑ. Вулакансене тутарсен илемлӗ литтераттурин ҫитӗнӗвӗсемпе паллаштарас шутпа ӑна „Сунтал“ра ҫапса кӑларас терӗмӗр.



# ТАВĂРĂП!

**В. ПАЙМЕН.**

ХĔВЕЛĔН вăрăмрах пайăркисем хăй курăнађђенех пĕлĕт çамкине килсе çулларĕç. Пĕлĕђĕ те вăтанса, те хĕпĕртесе çĕр çумĕнђен тўпенелле хĕрелсе кайрĕ. Ирхи усă сывлăм кăмăла савăнăç куççулĕ тултарђĕ. Çĕрĕн хĕвелтен хăраса тăракан сулхăмĕ çара ура тĕпне кăтăклаť.

Епĕ сывлăша çавăраймасăр, йĕвене пуç тавра çавăрса ту хыçнелле сиккелесе ђупатăп. Çул хĕрĕнђи ĕнер шăтнă курăксем сывлăм пĕрђисемпе йăлтăртатса манран кулса йулаççĕ.

Майăн пĕрремĕшĕ. Епĕ ђасрах ту хыçне çитсе, лашана тупса таврăнасшăн. Май уйавне тума хатĕрленсе пĕтменђђĕха. Ђупнă çĕртех асра шухăш çавăркаланса илет. Йалавĕ çине пуквăсене лартса пĕтерменђђĕ. „Сывă пултăр пĕтĕм тĕнђ ..“ тесе çех çырнăха.

Ту çине хăпарса çитсен, ту хыçĕнђе, йешерекен вăрман варĕнђе çывăрнă хĕвел, ал-урисене ђăскаласа, анаслакаласа, мана ыталаса илђĕ. Çакăнта май илемне, май хăватне, унăн тĕнђери пролеттарине вăратмаллăх вăй пуррине тата хытăрах ĕненнĕ пек туйăнђĕ.

Аша май илемĕ тулса ларнипе, малалла утаймасăр, çул хĕрĕнђен пăрăнса йешĕл курăк çине ђăсăлса выртрăм. Пуç ахаљ, пушшăн выртађђен шухăша кайрĕ. Май. Пирĕн савăнăçлă. Ытти çĕрте апла мар теççĕ. Унта капитал, кунта вăл çук. Пурте ирĕклĕ савăнса иртерме пултараççĕ майăн пĕрремĕшне. Мĕншĕнха епĕ те майа савăнса иртерме пултарап. Мĕн панă епĕ çак ирĕклĕ хĕрлĕ майшăн?.. Мĕн çухатнă?..

---

8 сехетре шкул патне пухăнтăмăр. Ман хĕрлĕ йалав çилпе ђўхенсе кукăр-макăр пуквисене вулаттармасť. Пурте пухăнса çитсен кўршĕ йала утрăмăр. Вĕсемпе пĕрлешсе арман патнелле кайма тапраннăђђĕ, ĕçлекенсем пире хирĕç тухнă та. Епĕ ирхине шухăшласа выртнă çĕрте, ту çинђе, ђарăнса, хире-хирĕç сăмахсем каласа пĕрлешрĕмĕр.

Йал тăрăх çўресе пĕтерсен киремет çăлĕ патĕнђе, йешĕл курăк çинђе ђей ĕçмелле турăмăр.

Ђей ĕçнĕ çĕре пĕр вăрçăран таврăннă çын пырса тăђĕ. Ĕçлекенсем унран фронтри ĕçсем çинђен ыйта пуçларĕç. Вăл вăрçă çинђен каланă ђух Урал фронтне аса илђĕ. Епĕ ђей ĕçсе пĕтерсен ăна айаккалла ђĕнсе ыйтрăм.

— Ес, Урал фронтĕнђе пулнă терĕн, унта ман пиђђене тĕл пулмани?

— Камђђĕха сан пиђу?

— Ара, пĕлместĕним? Прукка.

— Есĕ Пруккан шăлнĕи, терĕ те вăл, ун сасси темскертен хăранă пек кăшт хуçăлђĕ.

— Епĕр унран пĕлтĕр çуркуннеренпех пĕр хут та илмен,— терĕм епĕ. Ђĕре темĕскер сисе пуçланипе епĕ пысăкланнă куçсемпе ун çине пăхрăм. Ђикĕнсе сивĕ шыва ђăмнă пек ыйтрăм:

— Вилнĕим вăл?

— Ђимха,—терĕ вăл. Унтан малалла утса киремет çăлĕ тараси çине ларђĕ. -- Итле, сан ун çинђен пĕлес пулаť, вилнипе вилменнине курăн. Унтан кĕпе тўммисене вĕçерсе киремет таса шывĕ çине пуçне ђиксе илђĕ те кала пуçларĕ.

— Пăслăкра епĕр пĕр касармăра выртрăмăр, пĕр полккăрахђђĕ. Епĕ 2-мĕш паттаљйонра, вăл 3-мĕш комунислă паттаљйонрађђĕ. Пĕрне пĕри ђас-ђасах куркалаттăмăр. Аван ађађђĕ Прукки. Унран лайăх йулташ курман епĕ.

— Пăслăкра сахал тăтăмăр. Ђаппайĕва Колђак фронтне куçарсан хусахсем харсăрланса пирĕн уйес патне çите пуçларĕç. Пире çавсене хирĕç ăсатрĕç. 3-мĕш паттаљйонра пурте çамрăкскерсем. Вăрçă ĕçне пĕрре те вĕренмен. Икĕ кунтан Каршшĕн йалне çитрĕмĕр. Каршшĕнтан 30 çухрăмра хусахсем, теççĕ.

— Каршшĕнта пĕр-ик кун выртмалла пулђĕ. Прукка йалти çамрăксен сойусне шыраса тупрĕ те, тепĕр кунне пĕрле çпектаккăљ лартса кăтартрĕç. Çпектаккăљ хыççăнах, 12 сехетре ун ђассовой пулмалла пулђĕ. Сивĕ, пăрлă çăмăр çунă пулнă. Вăл шинелсĕрех шăнса, 2 сехет ђĕтресе тăнă. Ирхине пытăм ун патне, ђирлĕ выртаť.

— Тата ик кунтан пире Саплĕн йалне куçарђĕç. Йала каçпа çитрĕмĕр. Прукка ђирлесе тăраканскер йала тухмарĕ. Каçранах выртрĕ. Епĕ те ун патне кайса калаçтаркаласа кăшт лартăм та, хваттере таврăнса выртрăм.

— Çур çĕр çитнĕ çĕре вăранатăп—урам пăшал сассипе йанраса тăраť. Килкартине ним пĕлмесĕрех ђупса тухрăм. Урлăпирлĕ пуљăсем нăйласа иртеççĕ. Урамра кăшкăрашу. Хыçалтан тухса Прукка хваттерĕ йеннелле ђупрăм. Хыçалтанах пырса кĕтĕм. Килкартинђе 3 хусахпа 2 хĕрли тытăçнă. Еп пырса çитнĕ çĕре Прукка та пўртрен сиксе тухрĕ. Вара тăваттăн пулса виç хусаха çĕнтертĕмĕр. Урамра туллийех хусах. Мĕн тăвас? Пурте хыçала тухса Каршшĕн çулĕ йеннелле ђупрăмăр. Йал вĕçĕнђе хусахсем хирĕç килсе тухаççĕ тесе хăранăђђĕ. Ђупса çитрĕмĕр, унта пĕр аллă çын пуçтараннă, пирĕн хыçран татах килеççĕ. Хăвăрт пĕр комантир хушнипе Каршшĕн çулĕпе ђупрăмăр. Пĕр çухрăмра пулĕ Ђикан шывĕ йухса вырťаť. Çавăн урлă каçса хăтăлас тетпĕр. Çите пуçланă ђух хыçалтан хусахсем хăвалаççĕ тени илтĕнђĕ. Хашкаса ђупса çитрĕмĕр. Пĕђĕк çырма, пысăк, шарласа йухакан шыв пулса тăнă. Саплĕн çўл йенђе арман пурђђĕ. Çав арман пĕвине татса йанă хусахсем. Ишме йăвăр пулмалла. Нумай шухăшламасăр, епĕ пăшала ыватрăм та шинеле хывса пăрахса ђăмрăм шыва. Çаврăнса пăхрăм, Прукка шинелĕ, винтовкки мĕнĕпе шыва сикнĕ. Нумайăшĕ ман пекех, нимсĕрех йухăмпа кĕрешеççĕ. Хăшĕсем Прукка пек пăшалсемпе, шинелсемпе. Вĕсене йăвăр. Ђас ăнтăха пуçларĕç. Хăшĕ-хăшĕ шыв майăн йухкаларĕç. Прукка та шыва кайађђĕ пулĕ, пĕр комантирăн лаши хўринђен тытса хăтăлђĕ. Ак леш хĕрне çитсе шывран тухакансем пулђĕç Анђах... шуйттан хусахсем леш йенне помпăсем йарăнтара пуçланă. Тухни пĕри ђикĕне-ђикĕне анаť. Епĕр çитеђђен пулемеђĕ шатлаттара пуçларĕ. Куратпăр шывран тухнă çĕрте вилĕм кĕтсе ларнине, çапах та тапăнатпăр малалла. Ак Прукка çитрĕ, тухаť шывран, епĕ те ĕселенсе тухатăп... Ђупрăмăр. Прукка ман çине çавăрăнса пăхрĕ... çав вăхăтрах ђĕре тĕпĕнђен такам хыттăн силлерĕ... Ђикĕнтĕм малалла...

---

— Темле пулнă вăл каç. Саплĕна çитсен комантир: — «Кунта хаљ лăпкă, хусахсем инçетре“, тенĕ. Раçветкă та йаман, патруљсем те кăларман. Темме тата 3-мĕш паттаљйона пĕр кунта салтак ĕçне вĕрентмесĕрех вăрçа ăсатмалла пулнă...

— Ђикĕннĕ майăн, мана такам çавăрса тытрĕ те малалла сĕтĕре пуçларĕ. Вăйа пуçтарса ура çине лайăхрах тăтăм та... ђĕре савăнђĕ. Прукка, хăйĕн те вăйĕ пĕтнĕ пулсан та, мана сĕтĕре пуçланă. Хăва тĕмисем патне çитнĕ çĕрте таçтан хусах йулануђĕсем сиксе тухса пире хупăрласа илђĕç. Унтан пурне те плена илсе арман витине кайса хупрĕç. Витере ларнă ђух Прукка питрех те салхуђђĕ.

— Епĕ сисеп,—терĕ вăл мана,—кунтан ђĕрĕ таврăнайас çук, анђах есĕ хăтăлассăн туйăнаť. Хăтăлсан асту: хытă тăр совет влаçĕшĕн... Çур сехетрен пире хуса кăларђĕç. Вăрманти тĕттĕм хуралнă пĕлĕтсем йеннелле туртăннă. Хĕвел тухăç пĕлĕтне вут хыпнă. Прукка çав йеннелле пăхса йерипе каларĕ:

— Куратни, ĕненетни? Епĕ саншăн пайан хĕвел тухасса ĕненетĕп! Саншăн çеç мар, пĕтĕм тĕнђешĕн тухĕ пайанхи хĕвел, пĕтĕм пĕлĕте хĕретĕ, пĕтĕм тĕнђене çунтарĕ...

— Çамрăк хусах офитсерĕ нухайккăпа ђарђĕ Пруккан сăмахĕсене...

— Арман хыçĕнђе пире пĕр рет туса тăратрĕç. Вăрăм усиллĕ офитсер командă пађĕ.

— „Комуниссем, антихриссем, топроволтсăсем 3 утăм мала... марш!“

— Прукка урисене хыттăн пусса тухса тăђĕ. Ун хыççăн тата тăваттăн, кăшт ђарăнса тăрса тухрĕç. Пиллĕкĕшне те айаккалла илсе карĕç... Пĕр минутран Пруккан çамрăк вăйлă сасси вăрмана çурђĕ.

— Перĕр! Йулашки сывлăшăрпа сывласа йулăр... Сирĕн кунăрсем шутлă... сирĕн ĕç пĕтнĕ. Сывă пултăр...

— Сасартăк пăшал сасси Пруккан сăмахĕсене татрĕ...

— Салп хыççăнах пирĕн таврари хусахсем тапăнђĕç арман хыçнелле... Вăрман айаккинђен хĕрлисен утлă çарĕ килсе тухрĕ... Ђĕре çурăлас пек шаккаса ыватрĕ мана вăрман йеннелле... Ђĕре таталђĕ... Пиллĕкĕшне хусахсем персе ĕлкĕрнĕ. Прукка сылтăм алли çинђе çĕкленсе выртаť. Мана курсан сăнĕ ђĕрĕлђĕ... Куçĕсем тĕсленђĕç.

— „Кала Вађука... ўстĕр, пољшевик пултăр... Тавăртăр...“ Унтан анасланă пек ђăсăлса илђĕ... Хĕвел хĕрри çĕр айĕнђен килсе тухса Пруккан питне ађашларĕ. Çăварĕ кăшт уçăлса йерипе „ĕненет-е-еп“ терĕ... Унтан куçĕсем тĕксĕмленсе питне сулхăмлатрĕç те...

Йулашки сăмахсем вырăнне салтакăн икĕ куçĕнђен икĕ тумлам тăтăлса киремет шывне тăварларĕç.

Епĕ çăл вăлашки çинђен кăшт çĕкленсе йерипе—„çитĕ“, терĕм.

Нумайђђен пĕр сăмах та ђĕнмесĕр лартăмăр. Унтан вăл кăмăлне хытарса пуçне çĕклерĕ те:

— „Унђух майăн 31-мĕшĕђђĕ, пайан майăн 1-мĕшĕ“, терĕ.

Епĕ макăрмарăм. Йун ђĕререн пуça, пуçран ђĕрене тапса вĕресе кайрĕ. Ăшран пĕр сăмах вĕретсе кăларђĕ. . Тавăрăп.

# ӐСЛӐЛӐХ—ӖҪХАЛӐХНЕ.

Патша вӑхӑтӗнђе ӗҫхалӑх ађисем аслӑ шкулсене кӗрсе вӗренесси ҫинђен тӗлӗкре те тӗлленмен. Аслӑ шкулсене (универҫситтет, инҫтиттут т. ыт. те) ун ђухне кимнаҫи йе туховнӑй (пупсен) ҫеминарийӗсене йе ытти ҫавӑн пек ђаплӑ ҫынсен ађисем вӗренекен шкулсенђен вӗренсе тухнисене анђах илнӗ. Патша правиттӗлстви ӗҫлекенсемпе хресђенсен ађисем аслӑ шкулсене кӗресрен питӗ сыхланнӑ. Пӗр патша министӑрӗ: „Вырӑс патшин правиттӗлстви кухharккӑ ађисене нихҫан тя универҫситтетсене кӗме ирӗк парас ҫук“, тесе те каланӑ. „Кухharккӑ ађисем“ тесе вӗсем ӗҫлекенсемпе хресђенсен ађисене каланӑ.

Совет влаҫӗ ӗҫлекенсемпе хресђенсемшӗн аслӑ шкул алӑкне ђарах уҫса йађӗ. Анђах унта кӗрес пулсан, нумай пӗлни кирлӗ. Ӗҫлекенсемпе хресђенсем ӗлӗк вӗренме пултарайман. Ҫавӑнпа Совет влаҫӗ вӗсен ваљђи йури ӗҫлекенсен факкуљттеђӗсем тенӗ шкулсем уҫса пађӗ. Ӗҫлекенсен факкуљттеђӗсенђе хапрӑк-савӑтсенђи ӗҫлекенсемпе йалтан сухапуҫ патӗнђен килнӗ хресђенсем вӗренеҫҫӗ.

Ӗҫлекенсен факкуљттеђӗсем (кӗскен каласан, рапфаксем) умӗнђе тӑракан сатађ вӑл — ҫитӗннӗ ӗҫлекенсемпе ђухӑн хресђенсене кӗске вӑхӑтрах аслӑ шкула кӗме хатӗрлесси пулса тӑрат̆.

Ђи пирвайхи рапфак Мускавра, вунӑ ҫул кайалла—1919-мӗш ҫулта февралӗн 2-мӗшӗнђе уҫӑлнӑ. Хаљђи вӑхӑтра пирӗн Совет Сойусӗнђе рапфаксен шуђӗ 70-рен те иртет. Вунӑ ҫул хушшинђе рапфаксенђен 50.000 ҫын ытла вӗренсе тухнӑ. Кашни ҫулах рапфаксенђен 8.000 ҫын ытла вӗренсе тухса пыраҫҫӗ.

Рапфаксене уҫнӑ кун—пролеттарилле куљттурӑн уйавлӑ кунӗ пулмалла.

# ЂӐВАШ РАПФАКӖ.

**Рапфак сакӑр ҫул тултарнӑ майӗпе С. ЛАСТ-Н аса илнисем.**

ПАЙАН теккапӗрӗн 24-мӗшӗнђе каҫ 5 сехетре Шупашкарта Ђӑвашсен рапфакӗ уҫӑлмалла. Мӗн тӗрлӗ савӑнӑҫ, мӗн тӗрлӗ хӗпӗртӳ! Пайанхи кун ђӑваш ӗҫхалӑхӗ Окт̆апӗр парнине уҫса, тивӗҫлӗ ђӑваш халӑхне унпа усӑ курма ирӗк парат̆.

— Ну, Ҫтаппан, профессӑр пулӑн, вӗрен, тӑрӑш, сире ваљђи науккӑн ҫӑтмах алӑкӗ уҫӑлат̆ пайантан вара. Айтаха, ђӑваш рапфакне уҫма кайар,—терӗ мана Йуман Мӗтрийӗ. Ун ђух вӑл Ђӑваш рапфакӗ уҫас пирки орканисатсиленӗ комиҫҫире ђленра тӑрат̆ђӗ.

Уйӑх ҫути кӑмӑллӑ ҫутатат̆. Ҫӑлтӑрӗсем пӗђӗкҫеҫ пулсан та уйӑхпа ӑмӑртмалла пӗринђен пӗри ытларах ҫутатасшӑн тавлашнӑ пек, пӗр ҫуталса пӗр сӳннӗ пек пулса хӗллехи каҫ илемне кӳреҫҫӗ. Ҫав каҫ илемӗ, савӑнӑҫ ман пуҫран ђасах тухас ҫук.

Акӑ килсе ҫитрӗмӗр икӗ хутлӑ пысӑк ҫурта. Ӗлӗк патша ђух ку ҫуртра пупсене калӑпласа кӑларнӑ, теҫҫӗ; ҫавӑнпа та шкулне хирӗҫех пысӑк ђиркӳ пур*). Ҫак каҫран вара ку ҫуртра ђӑваш ӗҫхалӑхӗн ађисем науккӑ ҫулӗпе утма вӗренмелле.

Ҫак каҫран вара ҫӗнӗ Ђӑваш рапфакӗнђе улађа йе шурӑ кӗпеллӗ, ҫӑпаталлӑ ђӑваш ҫамрӑкӗсем хӑйсен ђеђен сассисемпе пысӑк ҫурта йанӑратса ђуна савӑнтара пуҫларӗҫ.



Ђӑваш рапфакӗн ҫурђӗ.

Рапфак уҫӑлсан малтанхи вӑхӑтра вӗренӳ ӗҫӗ хаљђи пек ҫирӗп план тӑрӑх пулса пыраймасђӗ. Рапфак штатӗнђе хӑйӗн вӗрентекенсем ҫук пирки, вӗрентекенсем ытти шкулсенђен анђах пырађђӗҫ, ҫавӑнпа та вӗсем хӑйсен вӑйӗсене рапфака кирлӗ таранах параймасђӗҫ. Ҫитменнине Мускавран килсе тӑракан хутсем ђас-ђасах сехӗрлентеређђӗҫ пире. Икӗ хутђен „Ђӑваш оплӑҫӗн хуҫалӑхӗ нађар, промышлӗннӑҫ ҫук, ӗҫлекенсем ҫук, ҫавӑнпа ӗҫлекенсен факкуљттеђӗ тенӗ шкул уҫма кирлех мар, ђӑваш рапфакне хупас“, тенӗ хыпарсем килсе перӗнђӗҫ пирӗн хӑлхасене; ҫак хыпарсем килкеленӗ вӑхӑтра ђӑваш рапфакӗ йулассӑн туйӑнмастђӗ. Анђах хӑрушӑ хыпар вӑхӑђӗсем иртрӗҫ ҫапах. Ђӑваш оплӑҫӗн пуҫӗнђе ӗҫлекен йулташсем тӑрӑшнипе, Мускавӗ те ђӑвашсене ӗмӗтрен татас мар тенипе, ђӑваш рапфакӗ пурнӑҫа кӗрсе йулђех.

Апат-ҫимӗҫпе тумтир пирки вӗренекенсем ытла та нађарђђӗ малтанхи ҫулсенђе. Хаљђи стутентсем тӑван килӗнђе ҫийеймен апатпа, йалта курайман тумтирпе пурнаҫҫӗ. Сакӑр ҫул кайалла ³/4 кӗренке ҫӑкӑр та, кӑмӑл ыйтнӑ таран шыв ӗҫ; кӑвак йӗмпе ҫӑпата ҫӗтӗлсен, килтен ыйтса илме пулат̆ђӗ (килте пуррин), тӑлӑх-турат, патракӗ ӳте ҫутатса ҫӳрекенсем те пурђђӗ. Опшђешитти тенинђе, икшерӗн пӗр вырӑнта выртса тӑмаллађђӗ, електритсӑ ҫутине ђӑваш стутенђӗ урамра анђах курма пултарнӑ. Анђах пирӗн пурнӑҫ ҫапла йӑвӑр пулсан та — коллективлӑ пурнӑҫ ӳкӗнме ирӗк памастђӗ. Халиђђен пирӗн хӑлхана кӗмен науккӑ хыпарӗсем тӑн пара пуҫласан, парттипе комсомол кирлӗ таран ӗҫлеме пуҫласан, пирӗн хушӑри йулташлӑх ҫыхӑнӑвӗ тата ытларах ҫирӗпленђӗ.

Рапфак уҫӑлсан 3-мӗш уйӑхра стутентсен вӑйӗпе шурнал кӑларма пуҫларӑмӑр, ђӗрӗ хаҫатсем те ђасђасах тухса тӑрађђӗҫ.

Ђӑваш стутенђӗсем вӗренӳпе коллективлӑ пурнӑҫа ҫирӗплетессипе пӗрлех тӑван ђӑваш йалӗсене те мансах тӑмастђӗҫ. Вӑй ҫитнӗ таран – вӗреннӗ хушӑрах, йалсене кайса тӗрлӗрен токлатсем туса, ҫпектаккӑљсем лартса стутентсен хорӗпе хамӑр халӑха савӑнтараттӑмӑрђђӗ. Йалти халӑхпа ҫамрӑк ђӑваш рапфакӗн ҫыхӑнӑвӗ темрен те хаклӑ тӑни каламасӑрах паллӑ.

*) Ђӑваш рапфакӗ хаљђи совпартшкул ҫуртӗнђе уҫӑлнӑ.

**Сакӑр ҫул тултарнӑ ђӑваш ӗҫ ҫамрӑкӗсен вӗренӳ вуђахӗ — Ђӑваш рапфакӗ сывӑ пултӑр!**

# Самарти ђăваш шкулĕ 6 çул тултарнă майĕпе.

САМАР респуплĕк тулашĕнђе. Ĕлĕкхи Самар кĕпĕрниниђе ђăвашсем Ђĕмпĕртинђен 3 хут ытла пулнă. Çапах та 22-мĕш çула çитиђђен Самар кĕпĕрнинђе пĕр вăтам шкул йађĕ те пулман. Пĕр ђăваш ађи те малалла вĕренме пултарайман. Ĕлĕк те ђăвашсем хушшине сарăла пуçланă пупсем, уђитлĕсем хушшинђе Самар ђăвашне шыраса тупаймăттăн. Самар Ђĕмпĕре çывăх пулсан та, шкулăн тĕттĕм йеннелле тăрса йулнă.

19-мĕш çула çитеђђен Самарта пĕр ђăваш орканисатсийĕ те пулман. Кĕпĕрнере 120.000 ђăваш, 150 ђăваш йалĕ пулнă. 120.000 çынна револ̧утси çил-тăвăлĕ тулланă вăхăтра пĕр йертсе пыракан орканисатсисĕр хăварма йураманнине сисекенсем пулнă пулмалла.

1919-мĕш çулта нойапĕрĕн 18-мĕшĕнђе, кĕпĕрнери тытăм пайĕ çумĕнђе ђăваш уйрăмĕ уçăлаť. Теккапĕрĕн 4-мĕшĕнђе комуниссен парттин кĕпкомĕ тата кĕпĕрнери çутĕç уйрăмĕ çумĕнђе çексисем уçăлаççĕ.

Кĕпĕрнери ђăвашсем çак орканисатсисем çинђен илтсен йăшăлтатма тытăнаççĕ. Самарта ђăн-ђăн ђăвашсемех ĕçлеме пуçланă хыпар тĕрлĕ майпа халăх хушшине сарăлаť. Ĕçлекенсем хăйсем кĕпĕрне тăрăх çӳрени ку ĕçе питĕ пулăшаť. Пирĕн йалтан пĕр хĕрлĕ салтак арăмне, хуђамăшĕ кăмăшка вĕретнĕшĕн Пăслăка илсе кайса, тĕрмене хупса хунă. Хĕрарăмĕ, вырăсла пĕлменскер, хăй хутне пĕр сăмах та калама пултарайман. Тĕрме кантăкĕ умĕнђен иртсе пынă ђух, Самартан ĕçпе килнĕ ђăваш çексисене уçакан И. В. Соловйов тĕрмен решотки витĕр ђăваш хĕрарăм кĕпине курах кайнă. Вара 6 уйăх ларас хĕрарăма сут уйрăмĕсене ăнлантаркаласа тĕрмерен кăларса йараť. Кун хыççăн И. В. Соловйова та, Самарта ђăваш çексийĕсем пуррине те труках пĕтĕм уйес пĕле пуçларĕ.

Самар хулинђи ђăвашсем тата хытăрах йăшăлтатаççĕ. Вĕсем вăл вăхăтра хулара ђылайăнах пухăнаççĕ. Рапођђисем, хĕрлĕ салтаксем — пурте ђăваш йатне илтсен пĕр çĕрелле туртăна пуçлаççĕ. 20-мĕш çулта, феврал̧те ђăваш клупĕ уçăлаť.

Октăпĕрте ђăвашсен политтĕк шкулĕ уçăлаť. Унта клуп тавра пухăннă хĕрлĕ салтаксем кĕреççĕ. Шкул вăйлах ĕçлеймест, анђах практĕка кайакан, темопилисатсипе киле таврăнакан курсантсем урлă, çывракан ђăваш йалĕсене аванах пăтраткалама пуçлаť.

Хăрушă, кашкăрланнă 21-мĕш çул урлă каçкаласа çак шкул 22-мĕш çула çитсе перĕнет. 22-мĕш çулта вăл шкултан ђăвашсен совпартшкулĕ туса хураççĕ. Кайран вăл вырăс совпартшкулĕпе пĕрлешсе пĕтет.

Çав çулах, Соловйов йулташ, тĕрлĕ çĕрте, тĕрлĕ майпа ђăвашсем вал̧ђи 2 сыпăклă шкул уçас тĕлĕшпе ĕçлеме тытăнаť. Ăна ђăрмантаракансем нумай пулаççĕ. „Кам ђăвашсене вырăс шкулне кĕме ђăрмантараť“, теççĕ.

Кĕпĕçтăвкомсенђе темиçе хут шкул ыйтăвне ларткаласан, 1922-мĕш çулта, нойапĕрĕн 8-мĕшĕнђе шкула уçма ирĕк параççĕ. Çав кунтанах Соловйов кĕпĕрне тăрăх хутсем салатаť. Теккапĕрте пĕр 10—15 ађа пухăнаť. Йанварте пĕр 30 ађана çитереççĕ. Йанвар уйăхĕ вĕçĕнђе йĕркеллех вĕренме тытăнаççĕ.

Пирвайхи çул вĕренес текен ађасене Самаралла туртăнтарса, ђăвашсене пăлхатса хăварђĕ. 2-мĕш çул вара пурте Самара тапăнаççĕ. Тӳрех 4 круппă уçса 120 ађа пухма май килет. 9-мĕш круппа 2 сыпăклă шкулсенђе, ĕлĕк „второкласни“ сенђе вĕренкелесе уђитле тухкаланисем пухăнаççĕ.

3-мĕш çул пур 5 круппи те уçăлаť. Ђăвашсем Самар шкулне пĕвесе лартма пикенеççĕ. Ахал̧тен мар-тăр пĕр меморантумра: „Кĕпĕрнери çутĕç уйрăмĕ нойапĕрĕн 6-мĕшĕнђе тухнă приккас урлă мана (шкулăн пуçлăхне) шкула ытла тултарса йанăшăн выкăвăр панă. Çапла çав. Ђăваш ађисем вăранђĕç. Килес çул вĕсем тата ытларах пулĕç. Шкултан хăваласа кăларса килĕсене кайалла йама пултараймăн...“, тесе çырнă.

Çаксенђен ђăваш шкулĕ ђăн-ђăнах пысăк ĕç тума пуçланине куратпăр. Шкул çумĕнђе иттернат уçни ђухăн ађисене суйласа кӳртме питĕ пулăшрĕ.

Шкулта халĕ 5 круппăра 160 ађа вĕренет. 200 çитерме май пур, анђах çурт çукки аптратса тăраť. Çурт пĕђĕккипе кăçал аран-аран кăпинетсем уçăлкаларĕç.

Ултă çул хушшинђе шкула 480 ађа кĕнĕ. 9-мĕш круппăран лайăх вĕренсе 84 ађа тухнă. Вĕренсе тухнисенђен 45-ĕшĕ малалла вĕренме аслă шкулсене кĕнĕ, 29-ĕшĕ йалта, уђитлĕре ĕçлеççĕ, 10-ĕшĕ ытти ĕçсенђе. Ĕлĕкхи вĕренекенсенђен иккĕшĕ хал̧ çак шкултах хăйсем вĕрентеççĕ.

Çак ултă çул хушшинђе пирĕн шкул çеç ӳсмест. Тата çĕнĕрен шкулсем уçăлаççĕ. Халĕ пирĕн оплăçре 160.000 ђăваш.

Мĕн пурĕ 9 ђăваш шкулĕ. 2 сыпăклă шкул пĕрре, 5 ХÇШ, Пăрăсланти петтехниккум çумĕнђи ђăваш уйрăмĕ, совпартшкулпа рапфак çумĕнђи уйрăмсем. Мĕн пурĕ пĕр хĕлте ђăваш шкулĕсенђе (22-мĕш çулхи 30 ађа вырăнне) 1.000 ђăваш ађи вĕренет (Ул̧йанăвскри ђăваш техниккумĕсемсĕр пуçне). Ку ĕç ултă çул хушшинђе пулнă. Анђах шкулĕсенђен хытăрах ђăваш ĕçхалăхĕн вĕренес ыйтăвĕ ӳссе пыраť. Кăçал пирĕн шкула 5-мĕш круппа кĕрес текенсем (40 вырăнне) 280 сайавлени панă. 240-ĕшĕ вырнаçаймасăр йулђĕç.

Пурнăç малалла тапнăçемĕн ђăваш ĕçхалăхĕн йунĕ пĕр ђĕререн тухакан тапăпа тапăнса пыраť. Ђăваш ăсталăхĕ ӳсет, сарăлаť. Вăратаť тĕрлĕ йенђен пусмăрланнă ђăваш ĕçхалăхне. Ђăваш та пĕр, пысăк, вĕри ђĕре тапнине сисет. Ђĕри — пур ĕçлекен халăха ирĕклĕ çулпа йертсе пыракан комуниссен парттийĕ.

**В. ПАЙМЕН.**



**Самарти ђăваш шкулĕнђе вĕренекенсемпе вĕрентекенсем.**

ђура ĕçĕ—усси, ĕçлекенĕшĕн мар, пуйаншăн, кулакшăн, кăпиталисшăн.

Акă, инçетре, çӳрçĕр йенђе пулăççем, кайăкçăсем. Вĕсем ирĕкре, уçă сывлăшра ĕçлеççĕ. Кунти ĕç савăнăçлă ĕç темелле, анђах тинкеререх пăхсассăн кăпиталисăмăн çиçтеми кунта та етеме ђуралантарни курăнаť. Кайăкçăсем кунта пĕтĕмпех кулаксем аллинђе. Кулак ђухăна тĕрлĕ майсемпе хăй алине çавăрса илет, вăл ăна кивçенрен кăлармасť. Вара тытнă кайăксене те пĕтĕмпе тенĕ пекех хăй аллине илсе пыраť. Ĕçĕ хăрушă, ĕçлекен пĕрмайах пурнăçпа вилĕм хушшинђе. Условисем йăвăр. Акă:

„...унăн аллисем ним сисми пулђĕç, хытса кайнă пӳрнисем нийепле те хускалаймаççĕ. Вăл ђас ђасах аллине ăшăтма тытăнђĕ, суллаť, тăлăп арки çумне çапаť, анђах ĕçлеме тытăнсанах каçхи сивĕ шăмма çитиђђенех шăнтса йараť".

Ĕçĕ ђăнах та ђăтма çук йăвăр. Анђах ним тума çук—хырăм кашни кунах çăкăр ыйтаť. Ђăтаканни ĕçлет, ђăтайманнин вара ирĕксĕрех вăрра тытăнас пулаť.

„Ку—хăрушă ĕç. Кашни пулăç çăкăра йăвăр ĕçпе тупаť. Хĕлле пăр çине кайсан вĕсенђен нихăшĕ те алли-урисене шăнтмасăр тавăрăнасса йе пăрпа пĕрле тинĕс варрине йухса каймасса шанма пултараймасť... Çавăнпа та вĕсем çын тытнă пулла вăрласа, ним шиксĕр хырăма тăрантарма хăтлапакансене питĕ кураймаççĕ".

Çерафимовиђ хăйĕн пĕр калавĕнђе çавăн пирки питĕ тискер ĕç пулнине кăтартаť. Петĕр Траљкона вăрăпа тытаççĕ. Вăл тем пек тархаслаť:

„Йарăр... йарăр... тăвансем... ађамсем тăлăха йулаççĕ... иртĕнсе тытăнман епĕ ку ĕçе... çиђĕ ађа... тăрантарас пулаť вĕсене..."

Анђах çынсем тискерленсех кайнă—ăна пăйавпа çыхаççĕ те вак патне сĕтĕрсе кайаççĕ. Вĕсемшĕн Петĕре шыва йани кăна сахал—ăна мĕн ђунĕ тухиђђенех вакран вака çитиђђен пăр айĕнђен пăйавпа турта турта каллĕ-маллĕ çӳретеççĕ. Йулашкинђен пăр çине туртса кăлараççĕ.

„Вăл тимĕр тумтир тăхăннă пек пăрпа хупăрланђĕ. Пуçĕ, çӳçĕ, куç харшисем, ђарса пăрахнă куçĕсем, сухалĕ, тумтирĕ—пĕтĕмпех уйăх çутипе йăлтăртатса тăраť.

Пулăççем ăна çĕклесе ура çине тăратрĕç те пăртак тытса тăђĕç. Сийĕнђен йухса анакан шыв шăнса купаланса пыраť. Унăн хытса кайнă аллине туйа тыттарђĕç. Унтан хăйсем çунасем çине ларђĕç те, тытнă пуллине те сĕрекисене те пăрахса хăварса, лашисене килелле хăваларĕç".

Епĕр пĕр калавне илсе анђах кăтартрăмăр, анђах Çерафимовиђ етем хăй пурлăхне çав тĕрлĕ тискерленсе сыхланине тата ытти калавĕсенђе те кăтартаť. Çавăн пек карттинсемпе писсатĕл харамлăх çиçтеми çын тĕсне, унăн етемлĕхне пĕтерме пултарнине кăтартаť.

Çак йулашки шухăша Çерафимовиђăн пуринђен ытла хапрăксавăтсенђе ĕçлекенсен пурнăçне, вĕсен ĕçне кăтартакан калавсем лайăх çутатса параççĕ. Çерафимовиђ 1902-мĕш çулта Новођеркаскра пурăнаť. Ново-ђеркаск çĕркăмрăкĕ кăларакан районта параť. Писсаттĕл унта шахтăра ĕçлекенсен пурнăçĕпе паллашаť, вĕсен ĕçне курма йури шахтăсене анса çӳрет.

Шахťор ĕçĕ йăвăр. Вăл ĕмĕрне çĕр айĕнђе иртерет. Çитменнине тата хăрушлăхсем нумай—çĕр ишĕлсе анма пултараť, ђас ђасах кас хыпса кайаť йе шыв персе тухса путарса вĕлерме пултараť.

— „Кунта ĕçлекенсем ђас-ђасах сийен кураççĕи?

— Пĕр ĕрне те ахаљ иртмест...

— Йулашки хăçан пулнă?

— Нумайах та пулмасť, пĕринне пуç ђашкине çĕмĕрсе пăрахрĕ.

— Вилсех кайрĕи вара?

— Вилмесĕр—пуçĕ йăлтах ванса кайнă, пуç мимисем те йухса тухнă".

Паллах, нумай сийенсем шахтăри ĕç условийĕсенђен те килеççĕ, анђах кăпиталисăм çиçтеминђе вĕсем пуринђен ытла шахтă хуçисем ĕçлекенсен пурнăçне, вĕсен ĕçне сыхласшăн тăрăшманнинђен килет. Хаљхи вăхăтра Совет влаçĕ ĕçлекенсен пурнăçне сыхлас тĕлĕшпе пур хапрăк савăтсенђе те, çав хушăрах шахтăсенђе те, мĕн мĕн тумаллисене саккун тăрăх хушаť, вăл саккунсене хисеплеменнисене питĕ хытă айăплаť. Çавăнпа Совет çĕршывĕнђе ун пек сийенсем капиталисăмлă патшалăхсенђинђен ђылай сахал пулаççĕ. Çерафимовиђ хăй калавĕсене çырнă вăхăтра та ун пек правĕлăсем пулнă, анђах шахтă хуçисем вĕсене питех тытса пыман, мĕншĕм тесен вĕсене тĕрĕс туса пырас тесен ђылай укçа кăлармалла.

Çак асăннĕ правĕлăсене шахтă хуçисем пурнăçра туса пыман пирки ђылай пысăк сийенсемех пулнă. Акă Уçпенски рутникĕнђе 1902-мĕш çулта пушарпа 61 çын çунса кайнă,—мĕншĕн тесен шахтăра ни пушар сӳнтермелли хатĕрсем ни çĕр айĕнђи ĕçлекенсене тухма саппаснăй çулсем пулман. 1905-мĕш çулта «Иван» йатлă шахтăра 300 ĕçлекен пĕтнĕ, мĕншĕн тесен шахтăра пухăнакан усал сывлăша хуçи тасаттарман, çитменнине тата ĕçлекенсене йурăхсăр лампăсем парса тăнă.

Патша правиттĕлстви ĕçлекенсен пурнăçне сыхлас тĕлĕшпе саккунсем кăларнă пулсан та, вĕсене тĕрĕс тытса пырас пирки шахтă хуçисене хистемен. Уншăн çĕр айĕнђе пĕрер икшер ĕçлекен вилни йе аманни ниме те пĕлтермен, пысăкрах сийенсем пулсан вăл ун пеккисем çинђен шарламасăр иртерсе йама тăрăшнă. Çерафимовиђăн калавĕсем çак тĕлĕшрен кăпиталисăм çиçтемине тем тĕрлĕ криттĕклекен йапаласем пулнă.

1902-мĕш çултан пуçласах Çерафимовиђ хапрăк-савăтсенђи ĕçлекенсен пурнăçне çутатма тытăнаť. Капиталисăм аллинђи ĕçлекенсен пурнăçĕнђе ăна пуринђен ытла йĕркесĕр експлоатаци тĕлĕнтерет. Ĕçлекенсем кунне 16 сехет таранђђен йе хăш ђухне талăкĕпех капиталиссемшĕн ĕçлеççĕ, анђах çав тĕрлĕ асаплансан та хăйсен нурнăçне етем йевĕрлĕ пурăнса иртерейменççĕ. Выçлăх, çуклăх, тĕттĕмлĕх—акă ĕçлекенсен ђи сывăх „тусĕсем".

Çерафимовиђ хăйĕн калавĕсенђе ĕçлекенсен ĕçĕ йурăхсăр условисенђе пулса пынине кăтартаť.

„Епĕ çак „канăçа пĕлмен çын" çине куçа илмесĕр пăхса тăтăм. Виççĕр утмăл пилĕк кун вăл пĕр вырăнта пĕр ĕçех туса тăраť. Ăна вăл, пĕр çул та мар, вунпĕр çул хушши туса тăраť.

Мана унăн канма вăхăт çукки кăна тĕлĕнтермест, вăл хăй канма тивĕçлине, канма кирлине ăнланманни, ун çинђен шухăшламанни тĕлĕнтерет. Çак тискер, пĕр вĕçĕмсĕр ĕç унăн шухăшне, унăн тăнпуçне ђуралантараť. Ун пуçне—савăт хуçи çак кăмакасем патнех, икĕ çын мар, виçĕ çын тăратнă пулсан вĕсен виççĕшĕн те пĕрер ернеллĕх канмалла вăхăт пулма пултарас шухăш пырса кĕмест. Çав вăхăтрах ăна ђирлеме йураманни, ђирлесен те нумай вăхăта ирĕк паманни,—мĕншĕн тесен „кăмакасем кĕтмеççĕçке,"—пурнăçра çаплах пулмалла тесе шутлаť".

Çак пĕр пĕђĕк татăках кăпиталисăм çиçтеми ĕçлекенсене експлоататсиленине, вĕсенђен етеме кирлĕ пур тивĕçсене те туртса илнине, вĕсене нумай çулсем хушши ђурара тытса ђĕрĕ çынтан мехханисăм, машшинă пайĕсем туса хунине питĕ вирлĕн кăтартса параť. Çерафимовиђ çак тискер, етеме тивĕçсĕр кăпиталисăм ĕçне пĕтĕм куљттурăллă халăха, пĕтĕм етем опђĕствине кăтартма тăрăшнă. Çав калавсемпех Çерафимовиђ ĕçлекенсене хăйсене, машшинă пайĕсем пулса кайнă çынсене, хăйсен пурнăçне тĕрĕссипе ăнланса илме пулăшнă. Çакăнта ĕнтĕ Çерафимовиђăн ĕçлекенсен класĕ умĕнђи пархатарлă ĕçĕ.

1905-мĕш çулхи револютси писсаттĕлĕ çĕнĕ темăсем параť—вăл хăй калавĕсенђе историре асăнма тивĕçлĕ револютсиллĕ кĕрешӳсене палăртса хăвараť. Вăл вăхăтри калавсенђен ђи палли „Преçнăра". Унта автăр теккапĕрти востанин йулашки вăхăђĕсене илсе кăтартаť. Хулара пурне те пусарнă, пĕр Преçнă анђах йулашки вăйне пухса çапăçаť. Тупăсем кĕрлеççĕ, пăшал пуљккисем ăнсăртран килсе çакланса хĕрарăмсене, ађасене вĕлерсе пăрахаççĕ. Урамсенђе çын виллисем. Патша политсийĕ, реаксиллĕ çар полккисем тем тĕрлĕ тискеррĕн востанийе пусарса хураççĕ. Çав вăхăтри ĕçсенех „Урамсенђи вилĕсем" тата „Пытару маршĕ" йатлă калавсем çутатса параççĕ.

1905-мĕш çулсем хыççăнхи Çерафимовиђăн творђĕствинђе револютсионер пысăк вырăн йышăнса тăраť. „Килте" йатлă калавра упăшки револютсионеррипе арăмĕ питĕ кăмăлсăр. Анђах упăшкине арĕслесен кайран хăй те револютси ĕçне пулăшма тытăнаť. „Вăл килђĕ" калавра револютсионер политсирен пытанса çемйинђен айакра пурăнаť. Вăл, тем тĕрлĕ шиклĕ пулсан та, арăмĕпе ађисене курма çĕрле килне вăрттăн пырса кĕрет. Анђах политсисем ăна йĕрлесе тупаççех. Унăн татах хăй çемйинђен уйăрăлса тарас пулаť.

«Çеçен хирти хула» Çерафимовиђăн ђи пысăк романĕ. Унта вăл кăпиталисăмăн пĕтĕм йурăхсăр ĕçĕсене, вăл ĕçлекенсене тем тĕрлĕ експлоататсиленине, кăпиталиссене сутăннă интеликентсин намăссăрлăхне кăтартаť. Роман çушеђĕ ђăн пурнăçран тухнă йапала. Автăр „Çеçен хирти хула" романра Сталинкратпа Тихоретски хуласем хушшинђи ђукун çула тунă вăхăта илсе кăтартаť. Ђукун çул тунă çĕрте темĕн ђухлĕ халăх ĕçлет. Пурте вĕсем татăк çăкăршăн таçтан таçтан пухăннă. Кăпиталиссем вĕсен вăйĕпе усă курса хăйсен мулĕсене ӳстереççĕ. Вĕсем хушшинђех çăмăл ĕçпе пуйма йуратакансем те йавăçса çӳреççĕ. Вĕсем йе трахтир уçса ĕçлекенсен йулашки укçисене хăйсен кăсйисене куçараççĕ, йе хĕрарăмсемпе усă курса пуйаççĕ, йе тата ытти çавăн пек ирсĕр ĕçсемпе пуйса пыраççĕ. Çерафимовиђ хăйĕн романĕнђе вĕсене питĕ аван кăтартаť.

Револютси хыççăн çырнисенђен Çерафимовиђăн ђи палли „Железный поток". Ку повĕç автăр çырма шухăшланă происветенин пĕр пайĕ кăна. Çерафимовиђ Раççейре пулса пыракан тĕнђере çук пысăк револютсиллĕ ĕçсене кăтартма шухăшлаť.

**УЙРĂМ № ХАКĔ 25 ПУС.**

Пурте СУНТАЛА çыранса илĕр!

**СУНТАЛА** вулакан, есĕ шурнала сарас тĕлĕшпе мĕн тунă? Хăвăн йулташусене СУНТАЛ шурнала çыртарса илтерме тăрăшатни? Ху çыранса илтĕни СУНТАЛ? Кашни СУНТАЛ вулаканах ăна çыранса илме тăрăштăр!

**СУНТАЛ** хăйĕн умĕнђе тăракан сатађсене, ăна мĕнпур малта пыракан ђăваш ĕçлекенсемпе хресђенсем тата çĕнĕ интеликентси пулăшса пырсан анђах, пурнăçа кĕртсе пыма пултарат̆.

Ђăваш ĕçхалăхне сотсиалисăм тăвас ĕçе нумайран нумай хутшăнтарса пырасси, ђăвашсен сотсиалисăмла куљттурине хăпартасси, ĕççыннисем хушшине çĕнĕ йăла, пролеттарилле йулташлăх кĕртесси, ђăваш ĕçхалăхĕн кулленхи пурнăçне куљттурă сывлăмĕ çаптарасси—çаксем пурте пирĕн умра тăракан пысăк сатађсем. Вăл сатађсене ђăваш ĕçхалăх пурнăçне ушкăнпа сăнаса пырса, ушкăнпа тытăнсан анђах тума пулат̆.

Пурте СУНТАЛА сарма тăрăшăр!


Реткоплеки претçетаттĕлĕ **А. И. СОЛĂТТĂВ.**

Ђленĕсем: **Антрейĕв В., Иссайĕв М., Касакков К., Кириллăв Н., Вaçанкка Н.**

Ђăвашаслăлит 984-мĕш №, 230-мĕш № саккас. Шупашкар, ФСУ шкулĕн типо-ђинкокрафийĕ. Тираш 2600.